ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

39 (4401) №, 2014, авăн, 25 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

# Хастар Федоровсем



**Пĕр тăван Олегпа Максим Федоровсем пирки: «Пирĕн хастар паттăрсем», – теççĕ Вăрнар районĕнчи Аçăмçырми ялĕнче пурăнакансем. Чăн та, çак сăмахсене тивĕç вĕсем. Çамрăксем кăçалхи çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче хĕрĕхрен иртнĕ ар çыннăн пурнăçне çăлнă-çке.**

Вăл кун хĕртсе хĕвел пăхнă. Олегпа Максим, нихăçан та ĕççĕр ларма юратманскерсем, аслисемпе уйра утă çинче вăй хунă. Кăнтăрла иртсен ĕç пĕтернĕ те амăшне:

– Анне, утă типиччен шыва кĕме кайса килер-и? – йăлăннă хайхискерсем.

– Халь шыв ăшăнса та çитеймен пулĕ. Шăнăр туртса лартсан? Инкек курса тăрăпăр тата. Шывпа вылянма кирлĕ маррине хăвăр та питĕ лайăх пĕлетĕр-çке, ачамсем, – хирĕçленĕ самантрах Элеонора Валентиновна.

– Анне, аннеçĕм, пирĕнпе нимĕн те пулмасть. Сăмах паратпăр, – тенĕ арçын ачасем амăшĕ çине ăшшăн пăхса.

– Юрĕ-çке апла. Анчах ас тăвăр. Виçĕ сехет çурă тĕлне килте пулмалла сирĕн. Типнĕ утта тиесе кĕресчĕ, çумăр айне тăвас марччĕ, – ăнлантарнă вăл тĕпренчĕкĕсене.

Хаваслă çамрăксем плотина еннелле вас-кана. Çитнĕ те тӳрех юлташĕсемпе пĕрле шыва чăмнă. Хăваламалла вылянă. Олег амăшĕн сăмахĕсене асра тытса вăхăт çине пăхсах тăнă. Акă сехет йĕппи виççĕ тĕлне çитсен вăл çыран хĕррине тухнă, тумтирне тăхăнса шăллĕне кĕтме тытăннă.

– Максим, атя тух шывран! – чĕннĕ асли кĕçĕннине.

– Тăхта-ха, ĕлкĕретпĕр. Тепĕр кăшт киленем-ха ишсе, – хирĕçленĕ Максим.

– Юрĕ апла, тепĕр кăшт тетĕн пулсан – кĕтетĕп, – тенĕ Олег шăллĕ çине пăхса.

Çапла пăхса тăнă хушăра пĕр ял çынни Сергей шыв айне анса кайнине асăрханă Олег. Пĕр минут иртнĕ, иккĕ, виççĕ... Хайхискер шывран тухман. Ырă мара сиссе Максима:

– Сергей пичче путрĕ пулас! Чăм шыва! Шыра! – кăшкăрнă самантрах.

Нумай пулмасть çиччĕмĕш класс вĕренсе пĕтернĕ Максим вăхăта сая ямасăр шыв айне анса кайнă, анчах тупайман ăна вăл. Иккĕмĕш хутĕнче вара ури пĕве тĕпĕнче выртакан Сергей кĕлетки çине лекнĕ.

– Пичче-е-е! Ак кунта вăл, ак кунта! – тесе хыттăн кăшкăрса янă.

Çыран хĕрринчи Олег хăпăл-хапăл тумтирне хывнă та шыва сикнĕ...

6-7 стр.

ÇЫРĂНТАРУ – 2015

Паянтан пуçласа ЮПАН 4-мĕшĕччен "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене йӳнĕрех хакпа çырăнма пулать!

Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕпе кукамăшĕ!
Эсир те хăвăр кăмăллакан кăларăмсене çырăннă чухне ачăрсене, мăнукăрсене парнесĕр ан хăварăр! Вĕсем "Тантăш" хаçата, "Тетте", "Самант" журналсене алла илсе вуласшăн.

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | ВД800 | 703,86 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар | В8353 | 286,08 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | ВД804 | 329,28 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 296,88 | 222 | 213 | 141 |
| [illegible] | В1524 | 188,82 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-сурт | В4806 | 167,88 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 353,82 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси | В3887 | 167,88 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 279,48 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 163,44 | 150 | 126 | 108 |
| Лик | В3429 | 120,36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 269,28 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | В4847 | 629,58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 256,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 157,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 125,52 | 114 | 111 | 90 |

ХАСТАРСЕМ

# «Учительсем те, вĕренекенсем те ырă»

**Виçĕ çул каялла Абузаровсен çемйи Азербайджан республикинчен Чăваш Ене куçса килнĕ. Икĕ ывăл çитĕнет вĕсен. Асли – Дашгын, кĕçĕнни Магамед. Халĕ Улатăр хулинче пурăнаççĕ, арçын ачасем 6-мĕш гимназире ăс пухаççĕ.**

Пĕр тăвансем, спорта чунтан парăннăскерсем, иккĕшĕ те самбо тата футбол секцийĕсене çÿреççĕ. Район, республика, Раççей ăмăртăвĕсенче тăтăшах тупăшаççĕ. Питĕ тăрăшуллă вĕсем. Çавăнпах ĕнтĕ килĕнче медальсемпе кубоксем йышлăн йăлтăртатаççĕ.

Магамедпа Дашгын çирĕп чунлă пулни те уççăн палăрать. Тĕллев лартнине пурнăçламасан канăç тупайманнине хăйсемех пĕлтерчĕç. Виççĕмĕш çул самбо секцийĕнче кĕрешÿ ăсталăхне туптакан Дашгын иккĕмĕш занятирех хăйне тивĕçлипех кăтартнă, тренера тĕлĕнтернĕ. Хирĕç кĕрешекене хул калакĕсем çине çавăрса çапма пултарнăран хăй те питĕ хĕпĕртенĕ. Маттур ачана вĕрентекенĕ те сăнама пуçланă, кашни ăмăртăва чĕннĕ. Арçын ача турткалашса тăман, хаваспах килĕшнĕ.

– Çĕрпÿри республика шайĕнче иртнĕ ăмăрту чи пĕлтерĕшли пулчĕ маншăн, – каласа парĕ Дашгын. – Пĕрремĕш кĕрешÿçĕ Етĕрнеренччĕ, эпĕ ăна çăмăллăнах çĕнтертĕм. Ыттисене парăнтарма вара йывăртарах килчĕ. Анчах та çухалса каймарăм, пĕтĕм чунпа çĕнтерÿ патне ăнтăлтăм, – терĕ арçын ача иртнине аса илсе.

Çавăн чухне вăл пĕрремĕш вырăна тухнă. Кубока, медале тата парнене тивĕçнĕ. Мордва республикинчи Ардатовра иртнĕ Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ кĕрешÿ ăмăртăвĕнчен те малти вырăнпа таврăннă маттурскер. Çитĕнĕвĕсемпе ашшĕ-амăшне тăтăшах савăнтарма тăрăшать Дашгын.

Пĕрре те ахаль ларма хăнăхманскерсем пушă вăхăт тупăнсанах стадиона çул тытаççĕ. Унта пĕр-пĕринпе ăмăртмалла чупаççĕ, мечĕк хăвалаççĕ, турник çинче туртăнса хул-çурăма çирĕплетеççĕ.

Мĕншĕн самбо секцине суйланă-ха арçын ачасем? Ашкăнчăксенчен, вăрă-хурахран хÿтĕленме вĕрентет иккен вăл. Ара, пурнăçра темле пăтăрмах та сиксе тухма пултарать-çке! Хăвна тата сывăх çынсене хÿтĕлеме пĕлни вара ун пек самантсенче питех те вырăнлă пулнине палăртаççĕ пĕр тăвансем.

Хĕлле йĕлтĕрпе чупма тата конькипе ярăнма кăмăллаканскерсем çуллахи каникула чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Ара ун чухне тăван çĕр-шывне каяççĕ-çке! Унта вара тинĕсре чун каниччен чăмпăлтатаççĕ, хĕвелпе хĕртĕнеççĕ, тăванĕсемпе тĕл пулса вăхăта хаваслăн ирттереççĕ.



Улатăра пурăнма килсен малтанах çĕнĕ вырăна хăнăхма йывăртарах пулнине пытармарĕç Абузаровсем. Шкултан та киле тунсăхлăн таврăннă. Халĕ вара хаваспах чупаççĕ унта. Юлташ та нумай вĕсен.

– Класа кĕрсенех мана Саша ятлă ачапа юнашар лартрĕç. Вăл питĕ калаçма юрататчĕ те çавăнпа кичем пулмарĕ, унпа часах туслашрăмăр. Вăл шкулта ăçта мĕн вырнаçнине кăтартрĕ, вĕренекенсемпе те паллаштарчĕ, – аса илет Магамед.

– Малтанхи вăхăтра ачасем шкултан пусăрлăнчăк кăмăлпа таврăнатчĕç, урама та тухмастчĕç. Кăшт вăхăт иртсен çеç пичĕсем йăл кулăпа çиçме пуçларĕç, юлташĕсем те тупăнчĕç. Мана хама та тунсăх пусатчĕ, тăван чĕлхепе атте-аннепе тăтăшах калаçас килетчĕ, – тет маттурсен амăшĕ Эльмира Хасрат кызы. – Кунта пур çĕрте те вырăсла пуплемелле, унпа халĕ те уççăнах калаçаймастăп-ха, – кулать вăл. – Анчах мĕн каланине йăлтах ăнланатăп.

Чăваш Ен шкулĕнче ачасем те, учительсем те ырă пулни килĕшнĕ вĕсене. Дашгынпа Магамед хăйсем те çынсемпе хутшăнма юратнăран, ютшăнманран часах пуринпе те пĕр чĕлхе тупнă.

Кĕçĕн класра чăваш чĕлхи те вĕренме тивнĕ урăх çĕр-шывран килнĕскерсен. Ку ĕç çăмăлах пулман паллах. Сас паллисемпе сăмахсем пач урăхла-çке. Çапах та, мĕнле йывăр килсен те алă усман, тăрăшнă. Хăш-пĕр сăмахсем тăван чĕлхерипе пĕр пекрех илтĕнни вара тĕлĕнтернĕ ачасене. Сăмахран, атте – атта пулать, анне – ана. Каярахпа азербайджан тата чăваш чĕлхи пĕр евĕртерех пулнине сиснĕ. Кун хыççăн вĕсене çак предмета ăнланма та çăмăлтарах пек туйăннă.

Дашгынпа Магамед иккĕшĕ те математика тата физкультура урокĕсене килĕштереççĕ. Задачăсене вĕсем çăмăллăнах шутлаççĕ, физкультурăра вара пур нормăтива та «5» паллăлăх пурнăçлаççĕ.

– Вĕренÿре, спортпа танлаштарсан, çитĕнÿсем тума йывăртарах мана, – тет Дашгын кăмăллăн кулса. – Спорт чуна çывăх, апла пулсан та кашни предметпах лайăх вĕренме тăрăшатăп.

Вырăс литературинчи хайлавсене вулама юратаканскер çыннăн тĕрлĕ енлĕн аталанмалла тесе шухăшлать.

Яланах çĕнтерÿпе çитĕнÿ патне ăнтăлакан Абузаровсем малашне те алă усса ларманнине пĕлтерчĕç. Ăнăçу пĕрле пуласса шанни тата чунтан тăрăшни çеç кирлĕ.

ТЕСТ

# *Эсĕ хăвна мĕнле хаклатăн?*



**1. Урампа пынă чух кашнинчех хăвна кĕленче витринăра сăнатăн.**

А. Çук. Ку – ман çинчен мар (0 балл).

Ă. Çапла. Хам айккинчен мĕнле курăнни мана яланах пăшăрхантарать (3 балл).

Б. Çĕнĕ тумтир тăхăнсан çеç çапла тăватăп (5 балл).

**2. Сутуçă тавăрса памалли укçана йăнăш парать. Эсĕ мĕн тăвăн?**

А. Укçана тепĕр хут шутлама кăмăллăн ыйтăп (5 балл).

Ă. Нимĕн пулман пекех лавккаран тухăп (0 балл).

Б. Укçана тĕрĕс тавăрса пама хыттăн ыйтăп (3 балл).

**3. Эсĕ мĕнле тумланатăн?**

А. Ыттисенчен кая юлас мар тесе модăпа килĕшÿллĕн тумланма тăрăшатăп (5 балл).

Ă. Кĕлеткен çитменлĕхĕсене пытаракан ирĕк тум суйлатăп (0 балл).

Б. Хама килĕшекен, хусканма кансĕрлемен япаласем çеç туянатăп (3 балл).

**4. Тусу сăн-сăпату япăхрах курăннине пĕлтерет. Хăвна мĕнле туйнине ыйтать. Эсĕ мĕн хуравлăтăн?**

А. Кÿренетĕп. Çапла каласа вăл кăмăл-туйăма пăсрĕ-çке! (0 балл)

Ă. Нимĕн пулман пекех калаçăва малалла тăсăп (5 балл).

Б. Унăн сăмахĕсемпе килĕшĕп. Хам мĕншĕн чирлĕрех сăнлă курăннине ăнлантарăп (3 балл).

**5. Эсĕ кăмăллакан каччă ытларах юлташупа вăхăт ирттерет. Кун пирки мĕн шухăшлатăн?**

А. Тусăма ăмсанăп (3 балл).

Ă. Ку мана питех те тарăхтарĕ. Юлташа мĕнле тавăрмалли çинчен шухăшлăп (0 балл).

Б. Манăн тантăшăм кăмăллă хĕр. Каччăсем унпа туслашасшăн пулни савăнтарать çеç (5 балл).

**6. Çĕнĕ тумтир-пушмак туяннă чухне яланах çывăх çынсемпе юлташусен шухăшне ыйтса пĕлетĕн.**

А. Çук. Хама мĕнле тум килĕшнипе килĕшменнине эпĕ каплах та пĕлетĕп (5 балл).

Ă. Кашнинчех çапла тăватăп (0 балл).

Б. Маншăн пĕлтерĕшлĕ самантсенче çеç çапла тăватăп (тĕслĕхрен, каччăпа тĕл пулма каяс умĕн) (3 балл).

**7. Пĕр класра вĕренекенсенчен кампа ытларах хутшăнатăн?**

А. Пуринпе те (5 балл).

Ă. Хăш-пĕр хĕр ачапа çеç (0 балл).

Б. Пуринпе тенĕ пекех калаçатăп (3 балл).

**8. Хĕр-тантăшусем шкула модăна çутатса паракан журнал илсе килнĕ те ăна пуç çĕклейми пăхса лараççĕ. Эсĕ вара мĕн тăвăн?**

А. Пырса та пăхмăп. Журналти пек тумтире пур пĕрех туянаймастăп. Вĕсем питĕ хаклă-çке (0 балл).

Ă. Пуринпе те пĕрле журнал страницисене тимлĕп. Хальхи мода мана та кăсăклантарать (5 балл).

Б. Журнала тимлĕн пăхса тухăп та çывăх вăхăтра çавăнти пек тумтир туянăп е хамах çĕлĕп (3 балл).

**9. Эсĕ пĕр класра вĕренекене тĕрĕслев ĕçĕ тума пулăшатăн. Вăл санăн ăс-тăнунтан питĕ тĕлĕнет. Мухтать. Эсĕ вара?**

А. Хам та унпа пĕрле тĕлĕнĕп. Ку тĕрĕслев ĕçĕн темине лайăх ăнланнă пуль эпĕ (0 балл).

Ă. Мана мухтанăшăн чунтан тав сăмахĕ калăп (5 балл).

Б. Вăтанчăклăн йăл кулăп (3 балл).

**10. Юлташу япăх лару-тăрăва кĕрсе ÿкнĕ. Пулăшăн-и ăна?**

А. Юлташсене пулăшма яланах хавас (5 балл).

Ă. Эпĕ хам та çын каланине итлеместĕп, ыттисене те сĕнÿ-канашпа пулăшмастăп (0 балл).

Б. Мĕн çитнĕ таран пулăшăп (3 балл).

### Пĕтĕмлетÿ

***16 балран сахалтарах.*** Эсĕ хăвна тивĕçлипех хаклама пĕлместĕн – кичем, илемсĕр тесе шухăшлатăн. Çавăнпа çынсемпе хутшăнма та вăтанатăн, вĕсемпе пĕр чĕлхе тупаймасран хăратăн, иметнĕтăн.

Çынсемпе нумайрах хутшăнмалла, калаçмалла. Хăвна тивĕçлипе хаклама вĕренмелле.

***17-34 балл.*** Пурнăçра хури шуррипе ылмашăннине пĕлетĕн пулсан та тунсăхлатăн. Ăнăçу санран аякра пек туйăнать. Ку – вăхăтлăха çеç! Тунсăха, пусăрăнчăк кăмăла сирсе яма тăраш.

***35-50 балл.*** Эсĕ хăвăнпа питĕ кăмăллă. Сана йăлтах тивĕçтерет. Маттур!

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (сур сула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР тивĕçĕсене пурнăçлакан – Г.А.МАКСИМОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1525 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3633
Пичете авăн уйăхĕн 24-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓡ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

ПРЕМЬЕРА


Культура çулталăкĕ

**Театр тĕнчи асамлă та илĕртӳллĕ. Сцена çинчи ĕç-пуçа сăнанă май куракан самантлăха та пулин хăйĕн хуйхи-суйхи пирки манать те сăнарсен пăшăрханăвĕ-савăнăçĕпе, ыратăвĕ-юратăвĕпе пурăнать. Тепĕр чухне хăйне тахçантанпах канăçсăрлантарнă ыйтăвăн хуравне те кунтах тупать, малалла талпăнма çĕнĕ вăй-хăват илет. Çапла, театр искусствин витĕмĕ пысăк. Артист этемлĕхĕн тĕрлĕ çитменлĕхĕ пирки сцена çинчен уççăн пĕлтерме пултарать. Куракана вара хăйĕн çине айккинчен пăхма май парать.**

# Пурнăç тем те кăтартать...



### Спектакльсем, çул çӳревсем...

*Иртнĕ эрнере Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх Çамрăксен театрĕ çĕнĕ, 82-мĕш сезона, уçрĕ. Артистсем куракансене тĕлĕнтерме, савăнтарма яланах хавас. Хальхинче те ырă йăларан пăрăнман вĕсем. Куракансем кăнтăрла «Чĕрĕ Сăмах» сăвă-кĕвĕллĕ ревю (Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Иосиф Дмитриев (Трер) тыткăнне лекрĕç тĕк каçпа «Пирĕн атте авланать» камите (Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Валерий Иовлев) курса кăмăлĕсене çĕклерĕç.*

Сăмах май, пĕрремĕш спектакле лартма Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантне те пулăшнă. Ăна Геннадий Айхи сăвăç юбилейне халалланă. Черетлĕ сезон тепĕр паха пуçарупа паллă: асăннă спектакле кăтартнинчен пухăннă укçатенкĕ «Айхи» общество фондне куçĕ. Театра юратакансем В.Иовлев камитне çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнчех хак пама пултарнă. Апла пулин те кĕрхи каçпа та халăх йышлă пуçтарăнчĕ премьерăна. Эппин, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Вячеслав Оринов лартнă спектакле хапăлласах йышăнчĕ куракан.

Çывăх вăхăтра театр тусĕсем тепĕр премьерăпа паллашĕç. Ку вăл – «Ылтăн кĕрӳ» камит. Унăн авторĕсем – Александр Пăртта драматург, артист тата Вячеслав Оринов режиссер. Хальхи чăваш тата вырăс авторĕсен хайлавĕсене тĕпе хурса лартнă спектакльсене те кăларĕç сцена çине. Вĕсен йышĕнче Егор Шашин композитор кĕввине тĕпе хурса хатĕрленĕ «Кот в сапогах» мюзикл, Василий Шукшин произведенийĕсем тăрăх йĕркеленĕ «Чун пирки манас марччĕ» либретто (Евгений Муравьев). Анатолий Хмытăн «Çерем çинчи çиçĕм» хайлавне тĕпе хурса лартнă спектакле те чăтăмсăррăн кĕтеççĕ-тĕр куракансем.

Юпа уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех Çамрăксен театрĕ вăрăм çула тухĕ. Чăваш артисчĕсене Калмăк Республикинче кĕтеççĕ. «Один дома» (Ирина Широбокова), «Собаки» (Константин Сергиенко, Станислав Васильев), «Суя пурнăç» (Маргарет Мэйо, Морис Эннекен), «Тăм тивнĕ чечексем» (Зинаида Долгова) спектакльсем пур ӳсĕмри куракан кăмăлне те тивĕçтермелле. Шухăшламалăх, вĕренмелĕх пур кунта. Калмăк çĕрĕнчи Б.Басангов ячĕллĕ Наци драма театрĕн туслă йышĕ вара тĕп хуламăра килсе çитĕ. «Араш», «Сказки Белого Месяца», «Сердце матери» спектакльсене курма йыхравлаççĕ артистсем. Театрсем хушшинчи туслă çыхăнăва йĕркелес енĕпе Раççей Федерацийĕн Культура министерствин грантĕ пысăк пулăшу кӳнине палăртмалла.

### Ваттисем васкама хушман

*«Пĕчĕк ачана – сăпка, ватта туя кирлĕ», – тесе шахвăртнă ĕлĕкрех чăвашсем. Анчах хальхи шур сухалсем пирки капла калани вырăнлах та мар пек. Вĕсем пурнăçпа тан пыраççĕ, XXI ĕмĕр çитĕнĕвĕ-ырлăхĕпе çамрăксенчен кая мар усă кураççĕ. Тен, тепĕр чухне ирттереççĕ те-и?.. Сăмахран, Шупашкартах кинемисемпе мучисене ятарлă курссенче компьютерпа ĕçлеме вĕрентеççĕ.*

Мĕн пирки тапратрăмăр-ха ку сăмаха? Ара, «Пирĕн атте авланать» камитри Куля Странный (Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артисчĕ Василий Павлов) çапларах шухăш патне илсе çитерчĕ. Спектакль ӳнерçи – Лариса Осипова, музыкине йĕркелекенĕ – Андрей Молодцыгин, ташă лартаканĕ – Алина Михайлова. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Станислав Владимиров кĕвĕленĕ юрă сцена çинчи ĕç-пуçа хăйне евĕрлĕ чĕрĕ те илемлĕ сĕм кĕртет.

Николай Петрович Странный – хуçалăха çирĕп тытса пыракан чăваш арĕ. Тăван çĕр çинче пурăнни, вăй хуни темрен те паха уншăн. Нумай юмахламасть вăл, каланине вара ялан ĕçпе çыхăнтарать. Тĕп сăнар ĕçченлĕхĕпе çыпăçулăхĕ пирки пӳрчĕ-хуралти те, вĕллисем те систереççĕ. Йышлă шăнкăрч йăвисенче те кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Шел те, ачисем çеç ăнланмаççĕ ашшĕне, çак ырлăха курма-хаклама пĕлмеççĕ. Мăшăрĕ çĕре кĕнĕренпе висĕ çул иртнĕ ĕнтĕ. Ывăлĕпе хĕрĕсен вара кашнин хăйĕн пурнăçĕ. Тăван киле килме вăхăчĕ те, кăмăлĕ те çук вĕсен. Паллах, ашшĕн чунĕ ыратать.

Тепĕр вăтă, тен, пуçне усăччĕ, тарăн хуйха путĕччĕ. Кирек кам та, анчах Куля Странный мар. Хушаматне чăнласах тӳрре кăларать вăл. Кушакĕ те çынсенни пек Мăрмăр е Пĕçук мар, Ален Делон ятлă унăн. Пурнăçра пĕр утăмне те чуххăмчаххăм тумасть Николай Петрович, йăлт виççе-шутласа. Шахмат вăййинчи пек. Тулĕк пурте ăнкараймаççĕ çав ку ăслая. Павăл ял старости (Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Александр Степанов) тĕлĕнсе пĕтереймест юлташĕнчен. «Пуç тăк пуç! Пуç мар, ГОЛОВА!» – тет вĕçĕмсĕр.

Ашшĕ туя йыхравлани кăна ачисене хуларан хăпса тухма хистет. Пуçланать вара тавлашу-супăшу!.. Аслин пурлăхĕ çамрăк арăм аллине лекессинчен хытă хăраççĕ-çке Митьăпа (Леонид Яргейкин) Люся (Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Ирина Архипова). Митьăн мăшăрĕ Света (Алевтина Семенова) та сăхланать мула. Самантлăха ринг çинчи пекех харкашаççĕ тăвансем, тытăçмани кăна. Пӳрт боксерсем çапăçакан тăваткал вырăнах çаврăнать. Пӳлĕме ятарласа карса илнĕ хĕрлĕ хăюранах куратпăр çакна. Каярахпа çак хăю хăйсенех тăллантарать, пурне те пĕрле çыхăнтарать. Мĕншĕн тесессĕн ачисем ашшĕн туйне пăсас тесе каварлашаççĕ. Спектакльте символла сăнарсем татах та пур. Сăмахран, мечĕк, ăна геройсем енчен енне ывăтаççĕ, пĕр-пĕрне айăплаççĕ, пĕр пăтăрмах хыççăн теприне шухăшласа тупаççĕ.

Люсьăн упăшки Леша (Виталий Сергеев) чее кушак аçине аса илтерет. Айккинче сăнаса çӳрет, ниме те хутшăнман пек, ик айкки те тăвайкки пек уншăн. Çук-мĕн, тепĕртакранах вăрттăн шухăшне пĕлтерет, ним мар ура хурать. Кулян кĕçĕн ывăлĕ Володя (Николай Тарасов) уява та килесшĕн мар. Ашшĕ вилнĕ текен хыпар кăна машинине тапратма хистет ăна. Пĕрре амăшне пытарма килнĕ вăл, тепре акă – ашшĕне...

Куля Странный тĕппипех «странный» çав. Валентинăна (Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Венера Пайгильдина), шăпах кĕçĕн ывăлĕн савнийĕ пулнăскерне, качча илет вăл. Туй арăмĕсен юрри-такмакĕ, ташши – йăлт пур кунта. Ял халăхĕн те, ачи-пăчин те пĕççисене шарт çапмалли кăна юлать. Пĕрре пăхма çеç ансат ку лару-тăру. Тĕрĕссипе, Николай Петрович Володя валли арăм илсе килнĕ. Чăнах, шӳтлеме те, чăваш пек ухмаха персе чеелеме те ăста вăл. Тинех хаш! сывласа яраççĕ Куля ачисем. Ир савăннă иккен. Ваттисем васкама хушман. Николай Петрович чăнахах та авланать. Пулас мăшăрĕпе Интернетра паллашнă-мĕн...

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

ÇĔНĔЛĔХ

# Ача-пăча драматургийĕн форумĕ

**Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх Çамрăксен театрĕ ача-пăча наци драматургийĕн лаборатори-форумне ирттерĕ. Асăннă мероприяти – театр искусствинчи тухăçлă проектсенчен пĕри. Вăл «Раççей культури (2012–2018 çулсем)» программăпа килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн Культура министерствин грантне тивĕçнĕ.**

Çавна май театр ача-пăча тата çамрăксен наци драматургийĕн регионсем хушшинчи конкурсне йĕркеленĕ. Пултарулăх ăмăртăвне 60 пьеса тăратнă. Вĕсен географийĕ анлă: Чăваш, Пушкăрт, Удмурт тата Коми Республикисем, Мускав, Санкт-Петербург, Новосибирск, Екатеринбург, Самар, Чĕмпĕр, Анапа, Калуга т.ыт. хуласем, Беларусь тата Литва Республикисем...

Юпа уйăхĕн 20–24-мĕшĕсенче авторсем Шупашкара регионсем хушшинчи лабораторие пуçтарăнĕç. Форум ертӳçи – паллă театр критикĕ, искусствоведени кандидачĕ Ирина Мягкова. Экспертсен йышĕнче – Раççей Федерацийĕн искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Валерий Персиков режиссер, Сергей Фишер театровед.

Лаборатори йĕркипе килĕшӳллĕн, Чăваш патшалăх Çамрăксен театрĕн çамрăк режиссерĕсем чи паха пьесăсем тăрăх эскиз спектаклĕсене лартĕç. Каярахпа вĕсене сӳтсе явĕç, хак парĕç. Çавăн пекех «Глобализаци тапхăрĕнчи ача-пăча театрĕ» темăпа çавра сĕтел, наци спектаклĕсен фестивалĕ иртĕ (уява Калмăк Республикинчи Б.Басангов ячĕллĕ Наци драма театрĕ те хутшăнĕ).

Чăваш Ен авторĕсем питех те маттуррине палăртмалла. Йыхрава йышăннисен шутĕнче – Ева Лисина, Михаил Сунтал, Геннадий Юмарт, Лидия Сарине, Левтина Марье, Надежда Кириллова т.ыт.те. Йĕркелӳçĕсем çавăн пекех студентсемпе преподавательсем форум ĕçне хастар хутшăнасса шанаççĕ.

*Ольга ИВАНОВА.*

# Ылтăн тупра

## Вăрман витĕр тухнă чух шур çунатлă кайăк куртăм...

Гена пичче шкултан килсен унпа сĕтел хушшине вырнаçрăм. Унччен маларах асаннепе апатланнăччĕ те, юрĕ-ха ĕнтĕ. Шарккупа сĕт тепĕр хут çисен нимех те пулмĕ. Умри тулли чашăка ăнсăртран чавсапа лектерсе урайне ӳкертĕм.

– Ых! Тирпейсĕр! Ларнă çĕрте çывăрса кайрăн-им?! Халĕ хăвах тасат! – хăтăрчĕ пичче тарăхса.

Унăн сăмахĕсем кӳрентерчĕç, тутана тăсса диван хыçне кĕрсе лартăм. Чун кӳтнипе ăна сăвăласа тăрăхлама шухăшларăм.

– Кăнтăр-кăнтăр Кенати
Хĕр вăрлама кайнă тет,
Çуни шăтăк пулнă тет,
Хĕрĕ ӳксе юлнă тет,
Макра-макра шырать тет, – терĕм хĕрелнĕ куçăма сăтăркаласа.

Хайхискер сасартăк ахăлтатса кулчĕ.

– Ну, йăмăкăм, ку сăвва пурте пĕлеççĕ. Енчен те эпĕ Иван ятлă пулнă тăк ман пирки епле сăмахсемпе юптарнă пулăттăн-ши-и-и?! – терĕ çаплипех кулма чарăнаймасăр.

– Эпĕ ăслă ача, пиччем. Эсĕ мана хăш чухне ахалех вăрçатăн. Апла пулсан итле малалла.

Иван ывăннă,
Сак хушшине хĕсĕннĕ,
Тараканне утланнă
Хăнкăлине çавăтнă,
Эрешменне хăвалать.

Пичче сасартăках кулма чарăнчĕ. Çакна кура диван хыçĕнчен йăраланса тухрăм.

– Чим, енчен те эпĕ Лариван ятлă пулнă тăк? – хăпмарĕ манран хайхискер.

– Лар, лар, Лариван,
Лаша кӳлсе курайман,
Ут утланса курайман,
Урхамахсем тытайман, – юптартăм пиччене куçран пăхса.

Куçне чарсах пăрахрĕ вăл. Унталла-кунталла уткаланă хыççăн:

– Тĕлĕнтермĕш ача иккен эсĕ. Тем те пĕлетĕн тата. Чим, енчен те мана аттепе анне Йăкăнат ятлă хунă пулсан? – терĕ тенкел çине ларнă май.

– Йăкă-йăкă Йăкăнат,
Шаркку вĕрет, тăкăнать,
Хăйĕн йăмăкĕсене
Шаркку антарса парать, – терĕм качака путекки пек сиккелесе.

Шарт! çапрĕ пĕççисене пичче.

– Мĕнле ача эсĕ? Кун чухлĕ сăвă таврашне ăçтан шухăшласа тупрăн? Атя, кил сĕтел çывăхнерех апла. Шаркку антарса парăп, – терĕ кĕскен.

Ăмăртмалла шарkку çиетпĕр. Пичче çамки çине тар тапса тухнине курсан – чăтаймарăм:

– Эх, Кенати, Кенати,
Намăсна ăçта хуран?
Ĕçленĕ чух тарламастăн,
Çинĕ чух кăна тарлан! – терĕм ун çинчен куç илмесĕр.

Пичче апат çиме пăрахрĕ, тарланă çамкине шăлса типĕтрĕ те:

– Эсĕ паян чĕресĕр хăвaратăн. Атя, çеккунтлăха та пулин калаçмасăр лар-ха. Апат çинĕ чухне пакăлтатни килĕшӳсĕр, – асăрхаттарчĕ вăл.

Чăнах, тĕрĕс калать вăл. Вара шăплантăм та тутлă шарккăва малалла çиме тытăнтăм. Чăнах, паçăртанпа хырăм та выçнă иккен манăн...



Тан пăр çинче ташла-ташла
Ура уксах пулатчĕ.
Çут çăлтăра пăха-пăха
Куçăм чармак пулатчĕ.




Сар кайăксен савнасси
Улăх ути çуличчен çеç,
Пирĕн вылясси-куласси
Ăшă кунсем иртиччен çеç.



Айтăр каяр вăрмана
Хура çырла пуçтарма!
Хура çырла çук пулсан
Айтăр каяр Хусана!



Вăрман витĕр тухнă чух
Шур çунатлă кайăк куртăм.
Савни çинчен шухăшласах
Çывăрмасăр тĕлĕк куртăм.

Элиза ВАЛАНС (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

Тантăш 5
39 №, 2014, авăн, 25

# Артист пулмаллах!



Пĕррехинче шкула Виктор Петров кулăш ăсти килнĕ. Вăл тăваттăмĕш классемпе тĕл пулу ирттернĕ. Темĕн те пĕр каласа тĕлĕнтернĕ хыççăн: «Халĕ, ачасем, кама мĕн кăсăклантарнине ыйтăр-ха манран, пĕтĕмпех хуравлăп», – тенĕ. Саша Жачев нумай шухăшласа тăман. «Ку чаплă костюма мĕн хакпа илнĕ-ши эсир?» – тесе куçне çинеçинех мăчлаттарнă. «Виçĕ пин!» – тенĕ те артист ăшшăн кулнă. Арçын ача сцена çинче выляма çуралнине тӳрех туйса илнĕ ĕнтĕ вăл, харсăрлăхне те асăрханă – маттурскере хăйĕн дискне парнеленĕ.

Халĕ çак арçын ача вуннăмĕш класра вĕренет. Ялти Культура çуртĕнче мĕнле те пулин уяв касçĕ ирттермелле чухне яланах ăна чĕнеççĕ. Ара, Саша илемлĕ те уçă сасăллă, хăйне тытма пĕлет, çавăнпа унран питĕ лайăх ертӳçĕ пулать. Ытларах вара арçын ачана спектакльте роль калăплама чĕнеççĕ. Культура çуртĕнче драмкружок ĕçлет, çамрăк артист ăсталăхне туптама унта çӳрет. Кружок ертӳçи – Ирина Григорьевна Иванова.

– Ватă çын рольне выляма йывăртарах. Эпĕ вĕсен чухлĕ пурăнса курман вĕт-ха. Мана ытларах кулăшла сăнарсем килĕшеççĕ, – ăнлантарать Саша. Паллах, роль чуна çывăх пултăр. Ăна чĕре витĕр кăлармалла-çке. Сашăн шӳт туйăмĕ пысăк. Çавăнпа вăл кулăшларах рольсене ытларах кăмăллать.

Лайăх вĕренет çеç мар вăл, наукăпа практика конференцийĕсене те хутшăнать. Географи предмечĕпе тĕпчев ĕçĕ хатĕрлесе, тĕслĕхрен, иккĕмĕш вырăна тухнă.

Вĕрентсен упа та ташлама пуçлать теççĕ, арçын ача та тĕрлеме пултарать. Çапла, тĕрĕ – Сашăн чун киленĕçĕсенчен пĕри. Кĕçĕн классенчех унăн вăрттăнлăхне алла илнĕ вăл. Халĕ те ăсталăх пӳлĕмне кĕрсен тĕрлеме пуçланă пир татăкне курчĕ те тӳсеймерĕ – йĕппе çип тытса ĕçе пуçăнчĕ.

Саша спортра та хастар, волейбол секцине çӳрет. Унăн команди республикăра район чысне хӳтĕленĕ, виççĕмĕш вырăна тухнă. Маттурскер çăмăл атлетикăпа та туслă. Чупни, йĕлтĕрпе çӳрени сывлăхшăн мĕн тери усăллă пулнине ăнланать вăл, спортăн çак тĕсĕсемпе ăмăртăва та хутшăнать.

Хăш-пĕр çын çине пăхатăн та – ялан ывăннă евĕр, пурнăçра нимĕнпе те кăсăкланман пек курăнать. Ун йышшисем сӳрĕк, нимĕнпе те интересленмеççĕ. Теприсем вара хăйсен хавасլăхĕпе, ăнтăлăвĕпе таврари çынсене те пурнăçа юратма хавхалантараççĕ.

Сашăна шăпах иккĕмĕш тĕслĕхрисен шутне кĕртес килет. Вăл кашни самантпа савăнса пурăнма пĕлет. Хăйĕн умне тĕллев те лартнă: пысăк çитĕнӳ тумалла, шкул хыççăн Культура институтне вĕренме кĕмелле, чăн-чăн артист пулмалла!

Кайăксем телейлĕ – вĕсен çунат пур, эппин, вĕçсе таçта та çитеççĕ. Этем вара? Ĕмĕт пулсан вăл та телейлĕ, мĕншĕн тесен ку та çунатпа танах. Унăн вĕçевĕ таçта çитме те пулăшĕ. Шухăштĕллевне пурнăçа кĕртме Сашăна турă пулăшса пытăрччĕ, хăй те тăрăшулăхне ан çухаттăрччĕ!

# Вĕрентекен е медицина ĕçченĕ?



Хăйне мĕн кăсăклантарнине аванах ăнланать-ха вун пĕрмĕш класри Оля Андреева, çапах чун ыйтнине хăш профессипе çыхăнтармаллине хальлĕхе татăклăн пĕлеймест. «Апла та пулать-и?» – тесе тĕлĕнĕ вулакансенчен хăшĕ-пĕри. Пулать çав. Оля химипе биологи предмечĕ-сене питĕ кăмăллать. Пĕр вăхăтрах медицина ĕçченĕ те, вĕрентекен те пулас килет унăн. Çапла иккĕленме сăлтавĕ те тупăннăха. Хĕр ачан амăшĕ, Надежда Германовна, шкулта химипе биологи вĕрентет. Çавăнпа та, пĕр енчен, çак ĕçе суйлас килет. Чирлисене те сывалма пулăшасшăн. Мĕн тумалла-ши? Пурнăç кăтартса парĕ.

Вĕренӳ отличникĕ конкурссене те, олимпиадăсене те хастар хутшăнать. Химипе тата биологипе яланах малти вырăнсене йышăнать.

Пушă вăхăтра ӳкерме, сăвă-калав çырма юратать вăл. Хăйĕн ĕçĕсенче çут çанталăк, вăрçă, тăван çĕр-шыв, спорт темисене хускатать. Пĕр-пĕр юмах вуласа тухнă хыççăн та хавхалану килет ăна.

Оля темиçе хутчен те районта стипендиат пулнă. Паллă ĕнтĕ, çак пулăшăва чи пултаруллисем тата тăрăшуллисем тивĕçеççĕ. Вăл тата пысăкрах ӳсĕм тума май парать. Ахальтен мар хĕр ачана районта «Ылтăн ертӳçĕ» тата «Ылтăн олимпçă» ятсемпе чысланă.

Асламăшĕн аппăшĕ тата аслашшĕ сакăр вунă теçеткерен иртнĕ ĕнтĕ. Вĕсене хăй тĕллĕн çӳреме йывăртарах халĕ, çавăнпа пăхса тăракан кирлех. Оля ватăсене ăнланать, яланах пулăшма хатĕр. Ырă кăмăллăскер пуплевĕпе те чуна йăпатма пултарать-çке.

Ольăн ашшĕ Чечня, мучăшĕ вара Афганистан вăрçисене хутшăннă. Ун пек çĕре лекме турри никама та ан хуштăр. Çывăх çыннисем каласа панинчен хĕр ача вăрçă тискерлĕхĕ çинчен сахал мар пĕлет. Хăюсăр çынсене валли мар вăл, çирĕп чĕреллисенче те тарăн суран хăварать. Каярах Оля çакăн çинчен чуна пырса тивмелле калав çырнă. Вĕрентекенĕ сĕннипе вара ĕçĕпе наукăпа практика конференцине хутшăннă. Унăн ĕçне чи лайăххи тесе хакланă.

– Мана кăсăклантаракан япала чылайха, пурне те пĕр вăхăтрах пĕлсе çитерес çук. Çав тери тĕнче курса çӳрес килет. Манăн ĕмĕт хăçан та пулин пурнăçланасса шанатăп, – тет Оля шухăшлăн.

Çĕрпӳ районĕ,
Тавăшкасси шкулĕ.

# «Çут çанталăка хӳтĕлемелли меслет шухăшласа кăларасчĕ!»

– Пĕррехинче пĕр кĕске сăвă пуçа кĕчĕ те эпĕ ăна Хĕрарăмсен кунĕнче аннене каласа патăм. Вăл питĕ савăнчĕ, мана мухтарĕ. Çывăх çыннăм йăл кулнă чухне вара хам та хĕпĕртетĕп, – аслă çын пекех ăслă калаçать Вăрнар районĕнчи Асăмçырми шкулĕнче тăваттăмĕш класра вĕренекен Саша Григорьев.

Çемйине яланах ырă ĕçпе, ăшă кăмăлпа савăнтарасшăн вăл. Çавăнпах шкулта лайăх вĕренет, пысăк çын пулма ĕмĕтленет. Килте вара май пур таран ĕçлесе пулăшать.

– Манăн пи-и-итĕ пысăк пулă тытас килет, – тепĕр шухăш-тĕллевне уçрĕ арçын ача. Çак ĕçе чунтан юратать вăл. Каникулта та кунсеренех пулла çӳренĕ. Хăш чухне çичĕ карас çеç çакланать унăн вăлтине, тепрехинче вара – ытларах. Пĕррехинче çекĕле пысăк пулă çакланнă, анчах вăл тухса тарма май тупнă-çке. Эх, куляннă вара Сашук! Анчах мĕн тăвăн-ха? Çырлахма тивнĕ.



Ăманпа çеç илĕртмест вăл пуллисене, ытти меслетне те аван пĕлет. Мачча çинче пăчкă кĕрпи пур. Унта вара вăрăм туна хурчĕ нумай. Шăпах çавсемпе карас тата уланкă тытать пĕчĕк пулăç.

– Ӳссе çитсен тĕпчевçĕ пуласчĕ, çут çанталăка хӳтĕлемелли меслет шухăшласа кăларасчĕ, – тет Саша чӳрече янахĕ çинчи чечеке тимлĕн сăнаса. – Пĕлетĕп, халех тăрăшмалла манăн. Çавăнпа эпĕ нумай вулатăп, конкурссене хутшăнатăп.

Пысăк чĕреллĕ арçын ача тăван тавралăх темипе ирттерекен конкурса хутшăннă, унта микробсем çинчен ăнлантарса панă. Çапла вăл Вăрнарта иккĕмĕш вырăна тухнă.

Нумаях пулмасть вăл М.Ю. Лермонтов вырăс классикĕ çинчен çырса хатĕрленĕ ĕçне конкурса ярса панă. Унта та çĕнтерес кăмăллă, хальлĕхе вара конкурс пĕтĕмлетĕвне чăтăмсăр кĕтет.

– Вăхăта интернетра ларса мар, уçă сывлăшра ирттермелле, урамра вылямалла. Атьăр-ха, сывлăха пĕтерер мар, – тет Саша мĕн пур ачана. Пысăк çын пекех тарăн шухăшлă калаçать вăл. Епле хирĕçлĕн-ха ăна?

# Хастар Федоровсем



(Малалли. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш стр.).

## «Анне, эпир ҫынна ҫӑлтӑмӑр»



Хӑрах аллипе Сергей хулӗнчен ҫаклатса ҫыран хӗрринелле ӑнтӑлнӑ Олег. Кӗҫех ӑна аслисенчен пӗри, Славик, пулӑшма чупса ҫитнӗ. Пӗрлех ҫыран хӗррине илсе тухнӑ ӑна вӗсем. Кӑвак сӑн ҫапма пуҫланӑскере пӗрремӗш пулӑшу панӑ...

Килне вӑхӑтра ҫитеймен пӗр тӑвансем. Палӑртнинчен чылай кая юлса таврӑннӑ. Амӑшӗ ачисене курсан сассине кӑшт хӑпартнӑ.

– Мӗнле-ха ҫапла? Панӑ сӑмаха тытма пӗлместӗр? Виҫҫӗ ҫурӑна киле ҫитӗр терӗм-ҫке сире. Ах, итлеми пулнӑ иккен эсир мана, – тенӗ кӑмӑлсӑрланса.

– Анне, ан вӑрҫ-ха пире, тархасшӑн. Эпир ахаль выляса ҫӳремен. Ҫын пурнӑҫне ҫӑлтӑмӑр, – сӑмах хушнӑ ачисем шӑппӑн ҫеҫ.

– Ҫын пурнӑҫне ҫӑлнӑ-ӑ-ӑ?! Ан шӳтлӗр-ха ҫапла. Пустуй калаҫнине илтес те килмест, – ӗненме пултарайман вӑл вӗсене ниепле те.

Ывӑлӗсем ҫав ӗҫ-пуҫ пирки тӗпӗ-йӗрӗпе каласа парсан Элеонора Валентиновна сехӗрленсе ӳкнӗ.

– Турӑ ҫырлахтӑрах! Юрать хӑвӑрпа нимӗн те пулман, – тенӗ ҫаплипех лӑпланаймасӑр.

Сергей больницӑра вунӑ кун выртнӑ. Килне таврӑнсанах Федоровсем патне каҫнӑ, тав сӑмахӗ каланӑ.

– Ҫывӑхра эсир пулман тӑк пӗтеттӗм вӗт ҫавӑнтах. Пысӑк тав сире! Ун чухне куҫ хуралса килчӗ. Урӑх, урӑх нимӗн те ас тумастӑп, – тенӗ вӑл.

Вадим Николаевичпа Элеонора Валентиновна Федоровсен ывӑлӗсем мӗн пӗчӗкрен ӗҫпе пиҫӗхнӗ. Урай та сӗрнӗ, савӑт-сапа ҫунӑ, апат пӗҫернӗ, пахчара тӑрмашнӑ, кил-тӗрӗшре вӑй хунӑ. Олег виҫҫӗмӗш класра вӗреннӗ чухне вара амӑшӗ ҫумне сухӑр пек ҫыпҫӑннӑ.

– Анне, сана питӗ-питӗ пулӑшас килет. Парха витре. Ӗне сума вӗренес, – йӑлӑннӑ куҫран пӑхса.

Чӑн та, ҫав кунтан пуҫласа каҫсерен кӑпӑклӑ сӗтпе тулнӑ савӑта пӳртелле йӑтма тытӑннӑ. Чӗрӗ чунсене юратаканскер кушаксен тата йытӑ савӑтне те сӗтпе тултарнӑ вӑл.

– Ҫийӗр, ҫийӗр, ыран пирӗн ӗнесем каллех уйран сӗтпе таврӑнӗҫ, – тенӗ вӗсене ачашланӑ май.

Олег ҫав тери лӑпкӑскер. Халиччен ҫын калаҫӑвне пӳлсе, пӗр сивӗ сӑмах каласа курманскер пулӑшу ыйтаканран нихӑҫан та пӑрӑнса иртмен. Кӳршӗре пурӑнакан ватӑсене уйрӑмах тимленӗ вӑл. Утти-улӑмне те пӗрре мар турттарса панӑ.

– Ах, ачам, аллу-уру яланах тӗрӗс-тӗкел пултӑр. Пирӗн пеккисене хавхалантарнӑшӑн пысӑк тав, – пилленӗ ӑна ватӑсем.

Чӑн та, унӑн ӗҫченлӗхӗнчен халӗ те пурте тӗлӗнеҫҫӗ. Тӗрӗссипе, тума пӗлмен ӗҫӗ те ҫук пулӗ унӑн. Ирхине пиллӗкре тӑрса ӗнесем суса апатлантарать, айсарӑмне тасатать. Пӑрӑвӗсене сӗт ӗҫтерет, чӑххи-чӗппине, кӑвакалӗсене тырӑ сапса парать. Кроликӗсене те тутлӑ апатпа савӑнтарать. Кукӑль-пицца, икерчӗ пӗҫерме юратать тата! Тӑпӑрчӑ тӑвассине те хӑй ҫинех илнӗ. Пахча ҫимӗҫрен амӑшӗ салат тунӑ чухне те айккинче пӑхса тӑмасть.

– Анне, эпӗ хамах. Эсӗ ахаль те нумай ӗҫлетӗн. Кан-ха, кан, – тесе ӑшталанма тытӑнать.

Кӑҫал авӑ ашшӗпе иккӗшех хуралтӑ тӑррисене витрӗҫ. Утӑ ҫинче те чылай тӑрмашрӗ. Вырӑхӗсем валли ҫителӗклӗ апат хатӗрлессишӗн чунтан-чӗререн тӑрӑшрӗ.

## «Вӑтӑр пиллӗкрех тӑлӑха юлтӑм»



Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗ Федоровсен ывӑлӗсемшӗн ӑнӑҫлӑ пуҫланнӑ. Олег тӑххӑрмӗш класс хыҫҫӑн Канаша пӗлӗвне малалла аталантарма ҫул тытнӑ. Максим вара Аҫӑмҫырми шкулӗн саккӑрмӗш класӗнче ӑс пухма тытӑннӑ.

Пурнӑҫ урапи чипер куснӑ чухнех лакӑма кӗрсе ларма пултарать иккен. Нумай пулмасть арҫын ачасен ашшӗ, Вадим Николаевич, куҫӗсене ӗмӗрлӗхех хупнӑ.

– Вӑл кунхине кунӗпех утӑ ҫинче ӗҫлерӗмӗр. Каҫ енне ҫеҫ пушантӑмӑр. Кӗтӳ ансан малтан пӗрне, унтан тепӗр ӗнине сурӑм та пӳртелле кӗрсе кайрӑм. Мӑшӑрӑм канам-ха тесе картлашка ҫине ларса юлчӗ. Акӑ кӑштахран Максим чупса кӗчӗ: «Анне-е-е! Пирӗн атте шурса кайнӑ-ӑ-ӑ!» – тесе кӑшкӑрса ячӗ. Чупса тухрӑм, чунӗ тухнӑ та иккен. Ҫав вӑхӑтра хама шалкӑм ҫапнӑн туйрӑм. Ах, Турӑ, хӑй вилнине сиссе те ӗлкӗреймерӗ пуль. Эпӗ пулӑ юратнине шута илсе лавккаран икӗ кило ытла таякан карп илсе килнӗччӗ. Ӑна тасатса морозильнике чикнӗ вӑл. Шел, пӗҫерсе ҫитерейменрӗ. Ҫав пулла хӑйне пытарнӑ кунхине ӑшаласа сӗтел ҫине лартрӑмӑр. Пурӑнмалла та пурӑнмаллаччӗ-ха унӑн, ачисене ура ҫине тӑратмаллаччӗ. Мӑнукӗсене утьӑкка сиктермеллеччӗ. Халь тата куҫ умне тепӗр самант тухрӗ. Ун чухне утӑ турттарнӑ вӑхӑтра мӑшӑра кӳршӗ: «Кунта лакӑм тавраш нумай, лав ҫинчен ан-ха. Тем сиксе тухма пултарать», – тесе асӑрхаттарчӗ. Вӑл вара: «Мускавра стройкӑра ӗҫленӗ чухне 18-мӗш хутран ӳксе те чӗрӗ юлтӑм та, ку лав пӗрре те хӑратмасть», – терӗ кулкаласа та шӳтлесе. Ах, хӑй вара картлашка ҫинчех вилсе кайрӗ. Ҫапла икӗ ачапа, вӑтӑр пиллӗкрех, тӑлӑха юлатӑп тесе ӗмӗрне те шухӑшламан. Анчах шӑпаран иртеймӗн ҫав. Хуҫалӑхра ар ҫын алли кирлех. Унсӑрӑн вӑл юхӑнать. Юрать ывӑлӑмсем вӑл е ку ӗҫе тирпейлӗ пурнӑҫлама пӗлеҫҫӗ. Ашшӗ вӗрентсе хӑварчӗ ҫав. Авӑ хам та аттесӗр ӳсрӗм. Йывӑрччӗ. Кайран та ӑна аса илсе макӑраттӑм. Вӑл конюхра ӗҫлетчӗ те унпа ӗҫе каяттӑм. Атте урхамахсене пӑхнӑ вӑхӑтра эпӗ те пӗр ҫӗре вырнаҫса ӗҫе пуҫӑнаттӑм. Шурӑ хут ҫине утсене ӳкереттӗм. Вӗсем шыв ӗҫнине, апат ҫинине, выляса ыткӑннине, аттепе ачашланнине, тихисем хӗвел ӑшшинче киленнине самантрах шурӑ хут ҫине сӑнарлаттӑм. Ах, юрататтӑм ҫав лашасене. Ӳкерчӗкӗсем те пӗр альбомах пухӑнса кайнӑччӗ. Вӗсене никама та кӑтартман эпӗ. Атте ҫут тӗнчерен уйрӑлсан утсене хӗрхеннипех хамӑр ҫемьепе пӗр ҫулталӑк пӑхрӑмӑр. Хӗллесерен ҫывӑхри вакран та витрепех шыв ӑсса вӗсене ӗҫтерме ӳркенсе тӑман. Хам та, Ҫӗмӗрле тӑрӑхӗнче сакӑр ачаллӑ ҫемьере ҫитӗннӗскер, ҫамрӑклах ӗҫ ҫумне ҫыпҫӑннӑ. Выльӑх-чӗрлӗхне те картиш тулли усранӑ. Анне пӗҫернӗ кастрюльти яшка самантрах пӗтетчӗ. Кӑмакаран пиҫсе тухнӑ вунӑ пысӑк кукӑль те пӗрре ларса ҫимелӗх ҫеҫчӗ, – ассӑн сывланӑ май иртнине аса илчӗ Элеонора Валентиновна.

## Олегпа Максим – чӑн-чӑн паттӑрсем!

Аҫӑмҫырмири вуннӑмӗш класра ӑс пухакан Андрей Федоров Олегпа Максим паттӑрлӑхӗшӗн ҫав тери мӑнаҫланать.

– Вӑл кунхине эпӗ те вӗсемпе пӗрлех шывра киленеттӗм. Инкек сиксе тухсан пӗр тӑвансем ҫухалса кайманни пушшех тӗлӗнтерчӗ. Ҫиҫӗмле хӑвӑртлӑхпа Сергей пиччене ҫыран хӗррине илсе тухрӗҫ-ҫке вӗсем. Эпӗ ун пек тӑвайман пулӑттӑм ахӑртнех. Ҫухалса кайни, шикленсе ӳкни ал-урана ҫыхлантарать-ҫке. Ҫыннӑн ырӑ кӑмӑллӑхне, ҫаврӑнӑҫулӑхне ҫакӑн пек самантсенче уйӑрма пулать те. Олегпа Максим – чӑн-чӑн паттӑрсем! Ҫав инкек хыҫҫӑн шывра чӑнах та асӑрханулла пулмаллине ӑнланса илтӗмӗр. Хӑшӗ-пӗри ун чухне: «Хальтерех шыва кӗме килместпӗр», – терӗҫ хӑраса ӳкнӗскерсем. Пӗр тӑвансене вара малашнехи пурнӑҫра ӑнӑҫу сунатӑп. Пирӗн хушӑмӑрта паттӑр ачасем пулни питех те савӑнтарать, – терӗ Андрей.

## Айӑпа кӗнӗшӗн – икӗ ӗне!



Пиччӗшӗ пекех ӗҫчен Максим. Килтисене пулӑшасси – пӗрремӗш вырӑнта. Выльӑх-чӗрлӗхпе калаҫма ҫав тери юратать. Ӗнисене ҫупӑрлать, пӑрушӗсене ачашлать, кроликӗсене йӑтса ҫӳрет, чӑххи-чӗппине лӑпкать, кушакӗсене ача евӗр утьӑкка сиктерет.

Мӑр-мӑр ҫӑвӑрласан ниҫта кайса кӗреймест вара.

– Анне, ҫурисене пӗрне те пӑрахмастпӑр. Вӗсем те чун-ҫке, ҫакӑ ҫутӑ тӗнчене пурӑнма килнӗ, – тет амӑшне.

– Ах, капла кушак кӗтӗвӗ кӑларас тетӗним, ачам? – хирӗҫлет Элеонора Валентиновна.

– Анне, эсӗ те пире юрататӑн-ҫке. Мӗн, кушак хӑй ҫурийӗсене юратмасть тетӗним? – илтӗнсе юлать унӑн сасси.

Сарӑ чӗпсемпе кролик ҫурисем те ӑна хӑват хуштараҫҫӗ. Вӑл вӗсене йӑтса ҫӳле ҫӗклет те:

– Халӗ эсир ҫав тери пӗчӗк. Акӑ сире кунсерен тутлӑ апатпа сӑйлӑп та пы-ы-ысӑк пулатӑр. Аннӗрсем те савӑнса пӗтереймӗҫ вара, – хӑпартланать вӗсене ачашланӑ май.

Унччен вӗсен тӑватӑ ӗнеччӗ, паян иккӗ ҫеҫ. Нумай выльӑх усрасси те ӑнсӑртран пулнӑччӗ.

Пӗррехинче Максим, лара-тӑра пӗлменскер, айӑпа кӗчӗ. Амӑшӗ хытӑ ятлаҫрӗ ун чухне.

– Апла-и-ха эсӗ? Вӑйна ниҫта хураймастӑн пулсан тепӗр икӗ ӗне илсе паратӑп. Вара ашкӑнма та вӑхӑт юлмасть, – терӗ.

Максим хӑй йӑнӑшне ӑнланса каҫару ыйтрӗ. Апла пулин те икӗ ӗнине туянса пачех амӑшӗ. Арҫын ача куншӑн савӑнчӗ ҫеҫ.

– Анне, халӗ икӗ ӗнине эпӗ, тепӗр иккӗшне Олег сӑвӗ, – мӑнаҫланнӑ выльӑхӗсене ҫупӑрласа.

...Ашшӗпе пӗрле Мускава каяс ӗмӗчӗ те пысӑкчӗ унӑн.

– Анне, пӗрремӗш ӗҫ укҫинчен сана валли савӑт-сапа ҫӑвакан машина туянса парӑп. Ах, хӑҫан палӑртнӑ вӑхӑт ҫитӗ-ши? – ӗмӗтленчӗ вӑл вӑхӑтра Федоровсен кӗҫӗн ывӑлӗ.

## «Малашлӑх пирки шухӑшламалла, ӗмӗтленмелле»

Канашра вӗренекен Олег кашни кун шӑнкӑравланисӗр пуҫне шӑмат кунсерен яла ҫӳрет. Пӗр кунхине, сӗтел хушшинче апатланнӑ чух, Олег сӑмах пуҫарнӑ.

– Анне, атте ҫук ӗнтӗ. Сире ялта мӗн тери йывӑр пулнине питӗ лайӑх пӗлетӗп. Шухӑшларӑм та вӗренме пӑрахас пулӗ терӗм. Каялла таврӑнса вуннӑмӗш класа ҫӳрӗп. Ах, кун пек инкек пуласса пӗлнӗ пулсан Канаша кайман та пулӑттӑм. Ҫитменнине ялтах лайӑх. Кунта пачах урӑх тӗнче, эсир ҫеҫ мар, юратнӑ выльӑх-чӗрлӗх те юнашарах, – тенӗ ассӑн сывласа.

– Ачам, малаллах вӗрен. Санӑн алла професси илсе укҫа ӗҫлесе илмелле пулать. Эпир кунта шӑллупа мӗнле те пулин пурӑнкалӑпӑр, ан пӑшӑрхан. Йывӑрлӑхсене епле те пулин чӑтса ирттерӗпӗрех. Мӗнле пулсан та, пурӑнмалла, ывӑлӑм, пурӑнмалла. Малашнехи пирки шухӑшламалла, ӗмӗтленмелле, чунпа ҫунатланмалла. Унсӑрӑн... Питех те йывӑр пулӗ, – хирӗҫленӗ самантрах амӑшӗ ывӑлне.

Максим та амӑшӗпе пӗр шухӑшлӑ пулнине палӑртнӑ.

– Пичче, чӑнах та, ан пӑшӑрхан. Эпир аннепе иксӗмӗр кӑштӑртатса пурӑнӑпӑр. Аптӑрамастпӑр пулӗ-ха, акӑ, нумай пулмасть аннепе кролик читлӗхӗ турӑмӑр. Эпӗ пӑта ҫапма пӗлмен ача мар-ҫке. Ӗне ку таранччен сунӑ, халӗ пултараймастӑп-шим? – калаҫӑва хутшӑннӑ Максим та.

– Анне, унччен мӗн тери пысӑк ӗмӗтсем пурччӗ. Халӗ... нимӗнле хаваслӑх та ҫук. Пуҫра та арпалӑх. Сире хӗрхенетӗп, – тенӗ Олег.

Ҫапла ҫав, Федоровсем пурне те хӗрхенеҫҫӗ. Вӗсен хуҫалнӑ йывӑҫ-курӑкшӑн та, хуҫасӑр кушаксемшӗн те, ҫумӑр айне пулнӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн те чунӗсем ыратаҫҫӗ.

– Шывра Сергей пиччӳне ыранӑ чухне шикленмерӗн-и? – тесе Максимран ыйтсан хайхискер шухӑша путрӗ.

– Хӑрарӑм ҫав... Вӑл вилсе каясран, – терӗ кӑштахран. – Эпӗ кирек кама та пулӑшма хатӗр.

– Усал шухӑшлисене те-и?

– Вӗсем те ҫынсемех. Кайран вӑхӑт иртсен хӑйсен йӑнӑшӗсене ӑнланса ҫынна ырӑ тума пуҫлӗҫ, – терӗ Максим ҫирӗппӗн.

Пӗр тӑван Федоровсем халӗ амӑшӗшӗн чӗререн пӑшӑрханаҫҫӗ.

– Анне сывӑ пултӑрччӗ ҫеҫ, йывӑр хуйха чӑтса ирттерме вӑй-халӗ ҫиттӗрччӗ. Ҫулсем иртнӗҫемӗн хамӑр ӗҫлеме пуҫӑнсан, ӑна ҫӑмӑлтарах пуласса шансах тӑратпӑр. Халӗ чи йывӑрри уншӑн – киле пӗччен юласси... Вӑхӑт вӗҫӗмсӗр-вӗҫӗмсӗр тӑсӑлать... Пӗртен-пӗр ҫӑлӑнӑҫ унӑн – выльӑхсемпе тата пирӗнпе калаҫса чунне пусарни, – терӗҫ Олегпа Максим шухӑша путса.

Вӑрнар районӗ,
Аҫӑмҫырми – Канаш.

**АВТОР сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем*

# Автан тăк автан!

Çуркунне никам та пӳртре ларасшăн мар çав. Пурте усă сывлăша тухасшăн. Эпĕ те кăнтăрласерен урам тăрăх кĕрлесе юхакан шыв тăрăх киленсе утатăп. Хутран тунă пăрахут иштерме юрататăп.

Паян та савăнăçлă эпĕ. Картлашка çинчи кăвак атта тăхăнтăм та çут çанталăк илемĕпе киленме тухрăм. Мĕтри пиччесен тĕлне çитсен ура йĕпеннине туйрăм. Мĕн амакĕ? Килтен чиперех тухрăм-çке. Пăта çине те пусмарăм темелле.

Карта çумĕнчи кирпĕч çине ларса атта хыврăм. Чăнах та ăшне шыв кĕнĕ. Таçта шăтартăм ĕнтĕ. Пĕлместĕп. Ӳркенмесĕрех чăлхана пăртăм.

– Ачамккă, мĕн тăватăн кунта? Килтисем хăваласа кăларса ямарĕç пулĕ те? – кăсăкланчĕ вун пĕрмĕш класра вĕренекен Валера Сорокин.

– Никам та кӳрентермен. Ывăннăран кăшт канас терĕм, – хуравларăм йăл кулса.

– Лисук, кур-ха, Мĕтри пиччесен пахчинче курăк шăтнă. Кĕрсе тат. Сирĕн килте хур чĕпписем тухнă. Вĕсене шăпах çавăн йышши апат кирлĕ, – терĕ йĕкĕт ман çине чеен пăхса.

Ух, сăмахĕсем хăпартлантарсах ячĕç. Ара, тĕрĕс калать вăл. Ĕнер асаннепе анне те хур чĕпписем çинченех пуплерĕç.

– Улăх-çаран симĕсленсенех вăй илеççĕ те-ха пĕчĕкскерсем, – терĕ асанне чӳречерен тинкерсе.

Халĕ килтисене савăнтаратăпах ĕнтĕ. Авă карта кĕтессинче ем-ешĕл курăк. Темшĕн вара савăтра çеç ӳснĕ. Кунта вĕсене шутласа та кăларма пулать тата. Кур-ха, çулçисем мĕн сарлакăш!

Картана васкамасăр кĕтĕм. Хайхисене йăлтах тăпăлтартăм. Тухса кайма çеç тăтăм – йывăç çумĕнчи хĕрлĕ савăтра та курăк ешернине асăрхарăм. Ăна та хăварас килмерĕ. Ара, хур чĕппisене пĕр кунлăх уяв туса парам ĕнтĕ. Хавас кăмăлпа килелле уттартăм.

Сарă тусăмсем паппа тăваççĕ иккен. Вĕсене асанне курупкăна ярса кăмака çине лартнă. Урамра усăлса çӳренĕ хыççăн шăннă пулас. Апла тăк кучченеçпе кайран сăйлăп. Хальлĕхе урама тухас.



© Маша КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

Пура çумĕнче атте вутă çурать. Ăна пулăшма тытăнтăм. Пуленкесене икшерĕн картише йăтатăп. Ку ĕç питĕ килĕшрĕ. Урамра ахаль чупса çӳрени мар вĕт.

– Вăй патăр! Пуç çĕклеми тăрмашатăр, – терĕ Санюк инке пирĕн тĕле çитсен.

– Тавах! Вăхăт пур чухне кăштăртатас терĕмĕр, – кăмăллăн пуплерĕ атте.

– Сирĕн маттур хĕрĕр Лисук пăрăç калчисене тăпăлтарса кайнă. Усăлччăр тесе савăчĕсемпех пĕчĕк пахчана тухса лартрăм та – ураланнă. Мĕн, çын япалипе пуяс терĕр-им?! – сассине хăпартрĕ сасартăк Санюк инке.

Пуç çаврăнса кайнипе чутах ӳкеттĕм. Пура кĕтессинчен аран тытăнса ĕлкĕртĕм. Чим, Валера пахчара курăк ӳсет терĕ-çке. Вăл пур кунта халĕ калчасем çухалнă тесе ĕнентерет. Хăшне ăша хывмалла?

– Ĕненетĕр е çук...

– Ан чĕн! – пӳлчĕ атте шурă куçĕпе шăтарасла пăхса.

Пӳрнене çăвара чикрĕм те тăратăп çапла кулянса. Çав йĕкĕте мĕншĕн итлерĕм-ши?

– Ачасене халех иртĕхтермелле мар. Кăшт хытăрах каласан та нимех пулмĕ. Унсăрăн кайран... – мăкăртатрĕ каллех Санюк инке.

Эпĕ хăвăртрах пӳрте чупса кĕтĕм те хайхи курăксене йăтса тухрăм.

– Акă илĕр, – терĕм хĕрелсе.

– Ăнт. Куратăр-и, хĕрĕр епле куштан! Пĕчĕк çеç хăй, алли кукăр. Ӳссен çынсене макăртаканни пулать. Ун чухне ăна пăрăçсем интереслентермеççĕ паллах. Ылтăн алка. Сулă тесен таçти картаран сикĕ. Халех вырăна лартмалла тĕпренчĕкĕре! – янăрашрĕ хайхискер.

– Лисук, авă, пĕрене çывăхĕнче хулă выртать. Çавна илсе килсем, – терĕ атте лăпкăн.

Чĕтреме ернĕскер вăл мĕн хушнине çийĕнчех пурнăçларăм.

– Акă сана çын пахчинче хуçаланнăшăн, – тесе пĕррех хулăпа çапрĕ.

Ах, ыратрĕ-ĕ-ĕ. Çапах куççуль кăлармарăм. Айăп çукран патакларĕç. Валерăна хама суйнăшăн питĕ кӳрентĕм. Пĕчĕкскертен çапла кулмалла-и вара? Ăна пула вăрă ятне илтрĕм.

Тепĕр кунне сӳрĕк кăмăлпа урама тухрăм. Ачасем çерем çинче футболла вылянине курсан унталла чупрăм. Валерăна курсан:

– Пичче, эсĕ мана мĕншĕн улталарăн? – терĕм кӳренсе.

Вăл ман çине шăтарасла пăхрĕ те:

– Санран мар тăк манăн тата камран кулмалла? Ватăсенчен-и? – лĕхлетрĕ кăмăллăн.

Пушшех тарăхрăм. Чун хурланнăран хăма çине кайса лартăм.

Ачасем çуйхашнăран пуçа ялтах çĕклерĕм. Валерăна автан тапăннă иккен. Йĕкĕт унран хăпас тесе хăлăсланать анчах. Чим, пирĕн Петька-çке вăл! Чупса пытăм та автана хăваласа ятăм. Пурте тĕлĕнсе ман çине пăхаççĕ.

– Лисук, тавах сана. Эсĕ çывăхра пулман тăк куççăр юлаттăм паян, – терĕ Валера пичĕ çинчи тарне шăлкаланă май.

Нимĕн те чĕнмерĕм. Çаврăнтăм та уттартăм килелле.

– Ĕнерхишĕн, тархасшăн, каçар. Эпĕ мĕн... – терĕ йĕкĕт мана хăваласа çитсе.

Каллех шăл шурри те кăтартмарăм. Пăрăнтăм та картише кĕрсе кайрăм. Вĕçкĕн те суеçĕпе урăх пĕр сăмах та калаçмăп.

# Пурччĕ юр кĕлетке



© Ксюша КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

Çĕр çине пĕрремĕш юр ӳксен çывăракан аппана вăратма хăтлантăм.

– Атя юр кĕлетке ăсталама! – кăшкăртăм унăн умне пĕшкĕнсе.

– Вăрманта-им? Каплах кăшкăрса хăлхана çурса пăрахас тетĕн-им? – мăкăртатрĕ стена еннелле çаврăнса выртнă май.

Кӳрентĕм. Манпа никам та вылясшăн мар. Ялан ĕçлĕ вĕсем. Пĕрин урок тумалла, теприн япала çумалла, виççĕмĕшĕ авă хуп турттарать.

Урама тухрăм. Аппасене тĕлĕнтерес тесе юр кĕлетке ăсталама тытăнтăм. Юр сахал пулнăран пĕчĕкреххине çеç туса лартма пултартăм. Нушалантăм паллах.

– Лисук, кил-ха кунтарах. Пĕр япала кăтартатăп, – чĕнчĕ юлташăм хăй патне.

Чупса кайрăм. Хĕвĕнчен кушак çури туртса кăларчĕ.

– Хуçасăр мăр-мăр ку. Унччченлехе ас туса тăр пĕчĕкскере, – тесе чĕтрекенскере мана тыттарчĕ.

Нинук картишрен кĕреçе йăтса тухрĕ те юр чавма тытăнчĕ. Унтан кушак çурине манран туртса илчĕ, шăтăка пăрахрĕ, юрпа хупларĕ.

– Аташук, мĕн айкашатăн? Хăвăнпа çапла хăтлансан? – терĕм сарăскере инкекрен çăлса.

Кăмăллăн лĕх-лĕх кулчĕ вăл. Тупата, аслашшĕне хывнă. Ваçук пичче çавăн пек çынран кулма юрататать.

– Санпа урăх вылямастăп. Лайăх мар ача эсĕ, – терĕм те вăрт çеç çаврăнса утрăм.

– Хăратрăн-ха, – пулчĕ кĕске хурав.

Хĕври мăр-мăр ниçта кайса кĕрейми чĕтрет.

– Йăлт аптăрарăм ку шăшисемпе. Сĕтел çине ним хăварма çук. Йăлтах кăшлаççĕ. Шкапри хутсене вакланă вĕт путсĕрсем. Килтен пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларса сирпĕтнĕ пулăттăм та çав, – ман пата çитсен пуплеме тытăнчĕ Варук аппа.

Хĕрхентĕм, анчах нимĕнпе те пулăшма пĕлеймерĕм. Чим, хĕвре мăр-мăр пур-çке! Сарăскере самантрах ăна тыттартăм.

– Кăшт ӳссен çав ăçтиçуксене самантрах вырăна лартĕ. Савăнса çеç пурăнма пуçлăн, – терĕм хĕпĕртесе.

Ара, тусăм валли кил тупрăм-çке! Кинеми те килнелле кăмăллăн утрĕ.

Çаврăнтăм та – Нинук тăра парать. Каллех лĕх-лĕх кулать. Аллинче пĕчĕк витре. Вĕри шывпа ăçта каятьши паянхи кун?

– Кăмăлна пăсас-и? – терĕ ман çине пăхса.

Чĕнмерĕм. Картише кĕме тытăнтăм çеç:

– Лисук, кур-ха юр кĕлеткӳне! – терĕ те ун çине шыв сапрĕ.

Вăл куç умĕнчех ирĕлсе пĕтрĕ. Макăрса пӳртелле ыткăнтăм. Ниепле те лăпланаймастăп. Асаннене мĕн пулнине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа патăм.

– Ытлашши кулянса чĕрӳне ан ыраттар. Çитес эрнере иксĕмĕр илемлĕ те пысăк кĕлетке ăсталăпăр, – терĕ те, йăл култăм.

Кĕçнерни кун урама тухрăмăр. Асаннепе васкаса çырмана антăмăр. Çур сехетрен юр кĕлетке хатĕр пулчĕ. Турăçăм, епле илемлĕ вăл! Асанне маттурах çав, маншăн епле тăрăшрĕ. Кайран юратнă çыннăм киле кайрĕ. Ĕçсем пур терĕ.

Çунапа сăртран кăмăллăн ярăнма тытăнтăм. Асанне парнине пăхса ытараймастăп-çке. Кĕçех Нинук çитрĕ. Вăл та çунапа. Пĕри те сăмах чĕнместпĕр. Тепĕр тесен, иртнишĕн хăй айăплă. Тен, манран каçару ыйтасшăн вăл халĕ? Вăтанать пулас. Çавăнпа хам сăмах пуçарас терĕм.

– Ярăнас килет-и? – терĕм ăшпиллĕн.

– Сана мĕн ĕç! Çырми сирĕн мар вĕт. Хăть юрласа ташлам, ан кансĕрле! – патлаттарса хучĕ хайхискер.

Аптăрамалла. Мĕншĕн ялан хирĕçесшĕн Нинук? Эпĕ ун пек мар-çке. Çапла тарăн шухăша путса тăраттăм, Нина юр кĕлетке çине çунипе кĕрех кайрĕ... Пĕтерчĕ асанне парнине.

– Путсĕр! – кăшкăртăм аякран.

Вăл вара çунине сĕтĕрсе пахча хыçĕпе тарчĕ.

Çук, хальхинче пĕр тумлам куççуль те кăлармарăм. Ялан макăрашни килĕшӳсĕр. Юр кĕлетке патне пĕшкĕнтĕм. Шел пулчĕ ăна. Ку хыпара асаннене каласан тарăхать паллах. Ара, Канаша каймасăр пулăшрĕ те мана.

Паянтан Нинукпа калаçмастăп. Пĕчĕклех манпа çапла хăтланать те ӳссен мĕнле ача пулĕ-ши унран? Эпĕ хам, сăмахран, лайăх ача. Çынна ырă çеç сунатăп.

Эх, пурччĕ юр кĕлетке, ĕнтĕ çук. Йăлтах Нина айăплă.

Тантăш 9
39 №, 2014, авăн, 25



**1943 çул. Сталинград тата Курск пĕккинчи çапăçусенче çĕнтертĕмĕр, Украинăна ирĕке кăларма тытăнтăмăр. Унăн пайне те пулин тытса юлас тесе тăшмансем Нарва, Сож, Днепр тата Сĕтлĕ шывĕсен хĕррине хӳтĕленӳ вырăнĕ тума палăртнă. Тухăç валĕнче Днепр тĕп вырăн йышăннă. «Вырăссем Днепра иличчен çак юхан шыв тепĕр май юхма тытăнĕ», – тенĕ Гитлер канашлусенчен пĕринче.**

# Çар ялавне упранă Костя Кравчук

## Днепршăн çапăçни

Сталин вара çапла хушу панă: нимĕçсен «пулăшăвĕпе» усă курса Днепр урлă хăвăртрах каçмалла. Çапла тунă та. Çак юхан шывшăн мĕн чухлĕ çапăçнине сахал мар çырса кăтартнă, чылай фильм ӳкернĕ. Анчах каласа çитерменни те пур-ха. Çухатусем тата харсăрлăх çинчен. Сăмах май, çак çапăçăва хутшăннисенчен икĕ пин çурă вырăс салтакĕ Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ. Вĕсен шутĕнче – çитмĕл ытла Киев салтакĕ. Украина тĕп хулине хӳтĕлеме хутшăннă пин çынна орденпа тата медальпе чысланă.

Чӳк уйăхĕн йĕпе-сапаллă кунĕсенче Днепр плацдармĕсенче хаяр çапăçусем пынă. Нимĕçсем парăнма шухăшламан, тылра вара хулана тĕп тума палăртнă. Украинăн Пĕрремĕш фрончĕн командующийĕ Н.Ф.Ватутин пĕрлешӳсен командирĕсене тата вăйлăрах тапăнма хушнă.

Пуçланнă вара. Чӳк уйăхĕн тăваттăмĕшĕ. Каçхине пирĕн танксем çапăçăва тухнă. Çутисем куçа çиеççĕ, сирена сасси хăлхана çурать, тупăран тата пулеметран çулăм шатăртатать. Гитлеровецсем нимĕн тума пĕлменнипе тарма тытăннă. Чӳк уйăхĕн пиллĕкмĕшĕнче, ир-ирех танксем Киев патне çитнĕ... Совет чаçĕсемпе подразделенийĕсем хулана кĕме тытăннă. Çав шутра – пирĕн полк та.

## «Пичче, пичче! Малалла ан кайăр!»

Ас тăватăп-ха, манăн танк пĕчĕк урама кĕрсенех пирĕн умра тăшман снарячĕ çурăлнипе икĕ тусан купи çĕкленчĕ. Виççĕмĕшĕ таçта хыçалта сасă пачĕ. Водитель-механик каялла чакса танка икĕ ватă акаци хыçне пытарчĕ.

Йĕпе-сапаллă çанталăк. Пăхмалли хушăкран та, тупă прицелĕнчен те тавралăх питĕ япăх курăнать. Эпĕ хупкăча асăрханса уçрăм та бинокльтен инçете пăхма тытăнтăм. Нимĕçсем ăçтан пенине куртăм. Сасартăк танк çумĕнчех ача сасси илтĕнчĕ:

– Пичче, пичче! Малалла ан кайăр! Урăх çул кăтартăп...

Пуçа çавăртăм та йывăç хыçĕнче вун икĕ çулсенчи арçын ачана куртăм. Вăл танк трансмиссийĕ çине питĕ çăмăллăн сиксе хăпарчĕ, хыттăн каларĕ:

– Атьăр пирĕн картишсемпе кайăпăр...

Йĕри-тавра пăхса çаврăнсан арçын ача мĕн сĕннине тавçăрса илтĕм, водителе кунта пурăнакансен çул хĕрринчи çурчĕсем енне кайма хушрăм. Пахчасем урлă эпир сасартăк фрицсен тылне тухрăмăр, вĕсен икĕ туппине таптарăмăр, хăй тĕллĕн çӳрекен машинине çунтартăмăр, урама хуплакан капланчăкне аркатрăмăр, чылай гитлеровеца çапса тăкрăмăр... Пирĕн çуран çар килсе çитрĕ те эпир малалла кайрăмăр.



## Питĕ пĕлтерĕшлĕ япала

Салтак ретне кĕресшĕн çунакан арçын ачапа сыв пуллашнă чухне эпĕ ăна хĕрлĕ çăлтăр тата блокнотпа çар сумкине парнелесе хăвартăм.

– Малашне санăн çулу шкулалла выртĕ, – терĕм харсăрскере.

– Пичче, эсир çав тери пысăк командир-и? – ыйтрĕ вăл сасартăк. Эпĕ кулса ятăм, танкри çулташăм Иван Фесенко вара шӳтлесе илчĕ:

– Çапла, арçын ача. Пирĕн взвод командирĕ рядовойсемшĕн палăрмаллах пысăк пуçлăх.

Маттур ача ман çумра тăракан салтаксене питĕ тимлĕн пăхрĕ те:

– Халех пĕр япала илсе килетĕп, питĕ пĕлтерĕшлĕскер вăл, – терĕ. – Кăштах тăхтăр-ха.

Тем вăхăтран хайхискер таврăнчĕ. Унăн аллинче – пысăках мар тĕвĕ. Ман пата пырсан арçын ача ăна салтрĕ те хĕрлĕ пусма кăларчĕ. Ку – çар ялавĕ.

– Эпĕ ăна упраса хăвартăм. Илĕр те кирлĕ çĕре парăр, – терĕ маттурскер. Çак ялав пирки вăл тĕплĕнрех каласа пачĕ.

## Красноармеец хушăвĕ

...1941 çулхи кĕркунне Киева гитлеровецсем вирхĕнсе кĕрсен арçын ача пурăнакан пӳрт умне йывăр аманнă красноармеец шуса çитнĕ. Ачана курсан ăна хăй патне чĕнсе илнĕ:

– Эсĕ пионер-и?

– Çапла.

– Апла ил те упра, – тесе салтак ачана пысăках мар тĕрке тыттарнă. – Манăн полк ялавĕ ку. Унăн салтакĕсем пурте пĕтрĕç. Эпĕ çеç юлтăм. Туятăп, нумаях пурăнаймăп. Пирĕн çарсем таврăнсан вĕсене пар...

Çывăхра снарядсем, минăсем сирпĕнме тытăннă. Вилме çитнĕ красноармеец арçын ачана пытанма хушнă, хăй вара ишĕлчĕксем хыçне шуса кайнă. Тек курман ăна. Анчах хушнине пурнăçланă. Çар ялавне шанчăклă вырăна пытарнă. Киева Совет çарĕсем ирĕке кăларнă вăхăтра вăл ăна пире пачĕ. Çак ялав çĕнĕ салтаксене хавхалантарса тăчĕ вара.

Пионер ячĕ – Костя Кравчук. Совет правительстви ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе чысларĕ.

Эпир тĕл пулнă кунхине пирĕн тата ытти подразделенисем хула варрине çитсе пыратчĕç. Çав çапăçусенче нумай харсăр салтак паттăрлăхĕпе палăрчĕ.

Чӳк уйăхĕн улттăмĕшĕнче ирхине Киеври гитлеровецсене пĕтĕмпех çапса аркатрăмăр. Хула фашистран тасалчĕ.

Унтанпа çитмĕл çул иртсен эпĕ тавра пĕлӳ музейĕнче курса çӳрерĕм. Ăнсăртран... çав харсăр арçын ачана парнеленĕ япаласене асăрхарăм. Экспоната кунта кам панине паянхи вĕрентекенсенчен никам та пĕлмест. Вĕренекенĕ халĕ ăçта иккенне те ăнкармаççĕ. Унтанпа кунти педагогсем те тăтăшах улшăнчĕç-çке. Историри нумай япалана пĕлмесĕр юлатпăр.

Çапах та çĕнтерӳ – пирĕнпех: салтаксемпе, çар çыннисемпе, Совет Союзĕн çĕрĕсемпе. Ячĕ те, ӳсĕмĕ те, халăхĕ те тĕрлĕрен. Анчах мухтавĕ вилĕмсĕр!

***Адам СЛАВКО.***

## Яланах асра!

Вăрçăри пионерсем
Пулнă вăйлă паттăрсем.
Ирсĕр, хаяр нимĕçрен
Шиклenme пачах пĕлмен.

Çĕнтерӳшĕн тăрăшса,
Йывăрлăхра шăл çыртса
Тем те тӳснĕ мĕскĕнсем!
Ĕмĕр çамрăк паттăрсем.

Пионерсен амăшсен
Мĕнле чăтнă чĕрисем?
Пит ылханнă чĕререн:
«Пĕтчĕрех çав путсĕрсем!»

Ашшĕсемпе пĕрле тухнă
Хамăр çĕршĕн кар тăрса.
Хĕн-хурне те пĕрлех курнă
Çут телей çинчен манса.

Çав вăрçа тек курас марччĕ,
Пурăнасчĕ туслăхра.
Пионерсен паттăр ячĕ
Пулĕ яланах асра.

***Алена ЛУКИЯНОВА.***
Шăмăршă районĕ,
Анат Чаткас шкулĕ.

# Чĕр чунсем те çара каяççĕ

Пурнăçри хăш-пĕр лару-тăрура вăл е ку чĕр чун этемрен чылай ăслăрах. Çут çанталăкран пирĕн чухлех уйрăлса кайманскерсем питĕ сисĕмлĕ, çавăнпа вĕсем инкекрен сыхланма пĕлеççĕ, пире те çăлса хăвараççĕ. Йытă ӳлени, йĕке хӳресем карапран тухса тарни тата ытти пулăм тимлĕрех, асăрханулăрах пулма хистет. Чĕр чунсене çар тивĕçне пурнăçлама та чĕнсе илеççĕ иккен!

## Дельфинсем

Тинĕсре пурăнакан сĕтпе ӳстерекен чĕр чунсене çар ĕçне явăçтарас шухăш чи малтан Раççейре çуралнă. 1915 çулта паллă дрессировщик Владимир Дуров çарпа тинĕс флочĕн Генштабне шыв айĕнчи минăсене тюленьсен пулăшăвĕпе хăрушсăрлатма сĕнӳ панă. Хайхисене çак шухăш килĕшнĕ. Икĕ уйăхран çирĕм чĕр чуна тĕрлĕрен хăнăхтарусене вĕрентнĕ. Тренировка вăхăтĕнче вĕсем шыв айĕнчи мина ĕлкисене çăмăллăнах тупнă.

Вьетнам вăрçи вăхăтĕнче чĕр чунсене çар ĕçне явăçтарас ыйту патне тепĕр хутчен таврăннă. Хальхинче американсем дельфинсене çарпа тинĕс патрулĕн ĕçне хăнăхтарма пуçланă. Кайран вара карапсене сирпĕтме хунă минăсене тата тăшман десантне асăрхама вĕрентес тренировкăсем пуçланнă.



Вĕрентӳ «ĕç – çирĕплетӳ» йĕркепе иртнĕ. Чĕр чунсене команда панă. Ăна тĕрĕс пурнăçлакана пулă çитернĕ. Каярах дельфинсем лару-тăрăва ăнланса çитнĕ те ăнăçлăрах çул-йĕрсене хăйсем шухăшласа кăларма тытăннă. Тренерсем çакна хапăлласа йышăннă.

Вĕрентнĕ чĕр чунсенчен улттăшĕ 1970 çулта Америка карапĕ çумне мина çирĕплетме хăтланакан алă диверсанта тытма пулăшнă. Çапла вара 2007 çулта АПШри çарпа тинĕс вăйĕсем дельфинсене вĕрентме вун тăватă миллион доллар уйăрнă.

## Слонсем

Антика (авалхи римлянсен историйĕпе тата культурипе çыхăннă) вăхăтĕнчех слонсем çапăçăва хутшăннă. Уйрăмах Инди, Китай тата Перси çĕр-шывĕсем вĕсене çак ĕçе явăçтарнă. Александр Македонский те çар слонĕпе çапăçăва тухни паллă. Тĕлĕнмелли çук: ку чĕр чунăн урисем вăйлă, шăлĕсем çивĕч, хобочĕ хăватлă. Хăш-пĕр тĕсĕсен хăвăртлăхĕ лашаннине те çитет. Слонсене «йывăр артиллери» тесен те йăнăш пулмĕ.



Çапăçăва валли аçисене çеç суйланă. Вĕсене çак ĕçе темиçе çул хăнăхтарнă. Тăшман вара хирĕç утакан çак чĕр чуна курсанах тарнă.

## Тĕвесем

Тĕвесем те слонсем пек мĕн авалтанах вăрçа хутшăннă. Вĕсемпе араб çĕр-шывĕсенче усă курнă. Пĕр тĕве çине икĕ çын вырнаçнă: пĕри – сăнă ывăтакан, тепри – çĕмренçĕ. Анчах çак йывăрлăха чĕр чун чылайччен тӳсме пултарайман, ывăнса çитнипе вилсе кайнă.



Çар тĕвисем хăвăрт куçса çӳреймен. Çавăн пекех унпа тăшмана хирĕç кайма тата ăна таптама та май килмен. Чĕр чуна сăнă тăрăнсан вăл çав самантрах çаврăннă та тарнă, юлан утçă вара ăна чарма пултарайман.

## Лашасем

Çак чĕр чуна çапăçăва кăлармалли чи авалхи меслет – пĕр тĕнĕллĕ урапа. Икĕ е виçĕ лашана кӳлнĕ урапа тепĕр чухне сехетре сакăр вунă çухрăм чухлĕ те кайнă. Каярах çар çыннисем юлан утпа çӳреме вĕренеççĕ, кун пек чухне хăвăртлăхĕ те пысăкрах-çке. Юлан утçăсем ухăсемпе, сăнăсемпе тата хĕçсемпе тухаççĕ. Лашине хăйне вара çивĕч йĕплĕ витĕмпе хӳтĕлеççĕ. Çакна пула ут хăвăртлăхĕ кăштах сахалланнă, анчах палăрмаллах мар. Пĕр талăкра юлан утçă вăтăр çухрăма хыçа хăвараять, ун чухне вара ку пысăк ӳсĕм шутланнă.

Çапăçу хирĕнче лашан хăвăртлăхĕпе тата чăтăмлăхĕпе çеç мар, харсăрлăхĕпе те усă курнă. Тапăнура юлан утçă хăйĕн лашине тăшман çине хăваланă. Çак янавар пулăшăвĕпе усă куракан вара сахал мар пулнă, çавăнпа тăшманăн тарасси çеç юлнă.



Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче çапăçăва пăшисене те илсе тухнă. Салтак ун çине хăпарса ларнă, мăйракисем хушшине пулемет вырнаçтарнă. Пăши пуçне хăех тăшман енне çаврăнă, пулемечĕн вара шатăртаттармалли кăна юлнă. Çак чĕр чун сехетре вăтăр çухрăм чупма пултарнă.

## Кăвакарчăнсем

Çак кайăксем инçе çула вĕçсе хăйсен йăвине таврăнма пултарнине çынсем тахçанах асăрханă. Авалхи Греци тата Египет çыннисемех вĕсен пулăшăвĕпе усă курнă. Çул çӳреве тухсан кăвакарчăнсене пĕрле илнĕ, урисем çумне депеша (васкавлă çыру) çирĕплетнĕ те ирĕке янă. Кайăк килне таврăннă, адресата çыру çитернĕ.

Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Европăри нумай çĕр-шывра (Германире, Швейцарире, Францире, Австрире) тата Раççейре кăвакарчăнсен çар почти те валеçнĕ. Çыру ярас тесен кайăка кăнтăрла ăсатнă. Пĕрре вĕçнĕ чухне вăл 600 çухрăма парăнтарнă. Вĕçевĕн вăтам хăвăртлăхĕ сехетре утмăл çухрăмпа танлашнă. Çырăвне хур тĕкĕ ăшне чикнĕ те пурçăн çиппе кăвакарчăнран çыхса янă. Кунсăр пуçне кăвакарчăнсем тепĕр тивĕç те пурнăçланă: тăшманăн çар вырăнĕсене çӳлтен сăн ӳкернĕ. Кайăкăн кăкăрĕ çине пĕчĕк те çăмăл камера çирĕплетнĕ. Вĕçнĕ чухне камера палăртнă вăхăтра хăй тĕллĕнех ӳкерчĕк тунă.

## Йытăсем

Йытăсене тĕнчери кашни çартах тĕл пулатăн. Ку чĕр чунсен хăлхи те, куçĕ те, шăршă туйăмĕ те çивĕч, тӳсĕмлĕхĕ пысăк. Чи кирли, вĕсем хăнăхусене çăмăллăнах вĕренеççĕ тата хуçине пăхăнаççĕ. Тăван çĕр-шывĕн Аслă вăрçинче йытăсем подрывник тата сапер тивĕçĕсене пурнăçланă. Совет çарĕ вĕсене тăшман танкĕсене тĕп тума вĕрентнĕ: чĕр чун çумне взрывчатка çирĕплетнĕ те ăна тăшманăн техникине арккатма хушу панă. Йытă танк патне чупса пынă, ун айне кĕрсе кайнă та бомба сирпĕннĕ. Çапла, ку питĕ тискер меслет. Анчах тăватă уралă юлташсен пулăшăвĕпе виç çĕр танка яхăн тĕп тунă.



Вăрçă вăхăтĕнче йытăсем санитар тивĕçне те пурнăçланă. Пĕрремĕш пулăшу памалли хатĕре кирлĕ çĕре илсе çитернĕ. Хăшĕ-пĕри вара аманнисене çапăçу хирĕнчен сĕтĕрсе тухнă. Çавăн пек санитар-йытăсем 700 пин ытла салтака çăлни паллă.

## Йĕке хӳресем

Вун пилĕк çула яхăн ĕнтĕ мина хирĕсенче йĕке хӳресем ĕçлеççĕ. Çак тивĕçе чи лайăх пурнăçлаканни – Африкăри арлан евĕр йĕке хӳре. Вăл сакăр çула яхăн пурăнать. Япăх курать пулин те питĕ аван илтет тата шăрша уйăрать. Тренировка irttерме çакă çеç кирлĕ. Йывăрăшĕ пĕчĕк пулни ĕçе татах çăмăллатать.

Африкăри Чамане ялĕнче тренировка ирттерме ятарласа полигон тунă. Кашни вунă метртанах мина лартса тухнă. Ун тĕлне çитсенех йĕке хӳре хăйне урăхларах тытма пуçлать (пĕр вырăнта çаврăнать е çĕр чавма тытăнать).

Тренировка вăхăтĕнче ăста мĕнле мина пытарни тӳрех паллă. Çавăнпа ăна тупнăшăн «сапера» бананпа е мăйăрпа сăйлаççĕ. Анчах чăн-чăн çар ĕçĕ вăхăтĕнче çимеллипе хавхалантарасси çинчен калаçмалли те çук, мина ăçта вырнаçнине никам та пĕлсе тăмасть-çке. Йĕке хӳре пĕрре йăнăшса уншăн апат çисен вара вăл малашне улталама тытăнĕ.



Паянхи куна Мозамбикăра çитмĕл ытла йĕке хӳре мина хăрушсăрлатас тивĕçе пурнăçлать. 2003 çулта ку ĕçе пĕрремĕш хут ăнăçлă пурнăçланă, пин-пин çын пурнăçне çăлнă.

*Камилла Никитина та, Ксения Порфирьева та çĕнĕ куна тренировкăран пуçлаççĕ: вĕсем ирсерен виçĕ çухрăм чупаççĕ. Вун пилĕк çулти тантăшсем çакна никам хушмасăр пурнăçлаççĕ. Кĕçех çамрăксен йышне Ольга Ваçанккапа Настя Лебедева та хутшăнаççĕ. Унтан Валерия Илларионова, Саша Николаев, Денис Васильев... Самантрах чăн-чăн ăмăрту пуçланать: кам Александр Иванович тренер палăртнă финиша маларах чупса çитĕ-ха? Кам-ши вăл Камилла, Александр Иванович? Сăмахăм И.Н.Ульянов ячĕллĕ Пăрачкаври ача çуртĕнчи спортсменсем тата вĕсене спортпа туслаштарнă Александр Иванович Николаев çинчен пырать. Шăпах çак çамрăксем Александр Иванович ертсе пынипе Чăваш Республикин чысне авăн уйăхĕн 13-14-мĕшĕсенче Олимп резервĕсен Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулĕнче иртнĕ "Атăлçи спорт Олимпĕ" спартакиадăра хӳтĕлерĕç.*



# Вăй хушать, хавхалантарать, туслаштарать



Республикăра ача-пăча спорчĕ те майĕпен ура çине тăрать. Спортсменсене хатĕрлекен ятарлă шкулсенче кăна мар, тĕрлĕ шайри вĕренӳ учрежденийĕсенче çамрăксем хаваспах старта тухаççĕ. Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕнче кăна кĕрхи старта тăват çĕр ытла спортсмен хутшăнчĕ.

"Атăлçи спорт Олимпĕ" – Атăлçи федерацийĕн округне кĕрекен 14 регионти ача çурчĕсенче пурăнакан 13-18 çулсенчи çамрăксен ăмăртăвĕ. Тĕллевĕ пархатарлă унăн: ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă çамрăксене ырă пурнăç йăли-йĕркисене хăнăхтарасси, спорт юхăмне явăçтарасси, пултаруллă спортсменсене тупса палăртасси, интернат шкулсен хушшинче туслă çыхăнăва йĕркелесси. Унăн пĕлтерĕшне республикăри вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствин ача-пăча прависене сыхлакан тата попечительство ĕçне йĕркелекен пай пуçлăхĕ С.Ю. Сырмолотова тата та лайăхрах уçăмлатрĕ:

– Ача çуртĕнчи çамрăксен спартакиади икĕ тапхăртан тăрать. Пĕрремĕш тапхăрĕ çу уйăхĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа авăнăн 15-мĕшĕччен тăсăлать. Иккĕмĕш тапхăрĕнче чи пултаруллă спортсменсем Атăлçи округĕнчи спартикадăна пуçтарăнаççĕ. Яшсемпе хĕрсем минифутбол (5-9 ача), волейбол (6-7 ача), стритбаскетбол (3-4 ача), дартс (1 хĕр ача, пĕр арçын ача), çăмăл атлетика эстафети (5 хĕр ача, 5 арçын ача), шашка (1 хĕр ача, 1 арçын ача), теннис (1 хĕр ача,1 арçын ача), ишсе (1 хĕр ача, 1 арçын ача) ăмăртаççĕ. Пĕрлештернĕ командăра 30 çын, – каласа пачĕ Светлана Юрьевна. – Чăваш Енĕн комнандинче Пăрачкаври тата Шупашкарти ача çурчĕсенче вĕренекенсем.

Спартакиадăна Мари Эл, Чĕмпĕр, Самар, Тутарстан, Пушкăртстан тата ытти тăрăхран çамрăк спортсменсем килнĕ. Эх, курасчĕ ушкăнсем пĕр-пĕриншĕн "чирленине", пĕр-пĕрне хавхалантарнине!

– Чăваш Республикин команди Самар облаçĕпе пĕрле 10-мĕш вырăнта. Пьедестал çине Мордва (1-мĕш вырăн), Пушкăрт (2-мĕш вырăн) республикисен тата Пермь крайĕн (3-мĕш вырăн) спортсменĕсем хăпарчĕç. Ку вăл эпир выляса янине пĕлтермест. Пирĕн кӳршĕсем вăйлăрах пулнине кăна çирĕплетет. Эппин вĕсенчен вĕренсе пырăпăр. Ача çурчĕсенче çитĕнекенсемшĕн Шупашкарти спартакиада туслăх кĕперĕ вырăнне пултăр. Тата вĕсен шăпине кăшт та пулин илемлеттĕр. Вĕсен хавхаланăвĕ спартакиадăра туллиех пулчĕ. Эпĕ волонтерсене тата механикăпа технологи колледжĕн студенчĕсен ушкăнне тав сăмахĕ каласшăн, – терĕ Светлана Юрьевна.

Хăнасен шухăш-кăмăлĕнче – ырри кăна.

– Пирĕн республикăра спорта уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Пекинри Олимпиадăра Мордовири çăмăл атлетсене пĕр континент спортсменĕ те хуса çитеймерĕ, – терĕ Артем Квашнин.

– Спорт пурнăç çине ырă куçпа пăхтарать, – палăтрĕ Кировран килнĕ Ольга Панкрухина.

– Спорт уявне лайăх йĕркеленине палăртас килет. Мухтав, Шупашкар! – терĕ "Атăлçи спорт Олимпĕ" спартакиадăна 3-мĕш хут хутшăнакан Саратов хĕрĕ Валентина Трегуб.

***Анатолий АБРАМОВ.***

**Сăн ӳкерчĕксене Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕн студенчĕсем Надежда ГРИГОРЬЕВĂПА Ольга ХУМОРОВА хатĕрленĕ.**



**• "ТĂВАН ЯЛĂМ ÇАПЛА ПУÇЛАННĂ" КОНКУРС**

# Ванькушкăн пĕтместех!

Эпĕ Чăваш республикине кĕрекен Ванькушкăн (вырăсла Ванькино) ялĕнче пурăнатăп.

Маншăн вăл – чи хакли. Хамăр ял ăçтан пуçланса кайнипе, çывăхри шывшур, сăрт-ту, вăрман, урам ячĕсемпе тахçанах кăсăкланатăп.

2006 çулта пичетленсе тухнă «Чувашская энциклопедия» кĕнекере Ванькушкăнь çинчен çапла çырнă: «Ванькушкăнь – Етĕрне районĕнчи Кивĕ Тинкеш хутлăхне кĕрекен ял. Унтан Шупашкара çитме – 85 çухрăм, райцентра – 36, чугун çул станцине – 83. Ял Юрпаш юхан шывăн сулахай çыранĕ хĕрринче вырнаçнă. Вырăнти халăх çĕр ĕçĕпе ĕçленĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ. 20-мĕш ĕмĕрте çил арманне хута янă. 1929 çулта Сталин ячĕллĕ колхоз йĕркеленнĕ».

Кил-çурт тата халăх шучĕ 2000 çулччен йышлăрах пулнă. Халĕ 83 çын çеç, 29 пурăнакан çурт, 7-шĕ пушă ларать.

Ял епле пуçланса кайнине икĕ тĕрлĕ ăнлантараççĕ. Пĕрисем каланă тăрăх хальхи ял вырăнне Ванька ятлă çын темиçе пĕлĕшĕпе куланай тӳлес мар тесе тарса килнĕ. Вĕсем пысăк вырманта пытанса пурăннă.

Теприсем вара 16-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче хальхи Патăрьел тăрăхĕнчен 16 çын килсе çитсе кунта тĕпленнĕ теççĕ. Вĕсен ертӳçи Ванька ятлă пулнă. Унăн ячĕпе яла Ванькушкăн (Ванька ушкăнĕ) тенĕ.

Пирĕн ялта икĕ урам: Уй тата Мир урамĕсем. Пĕрремĕшне малтан Леш айкки урамĕ тенĕ, теприне – Мăн урам.

Тăван кĕтесĕм ыттисенчен тарăн çырмасемпе, варсен йышĕпе уйрăлса тăрать.

Вĕсен ячĕсем те хăйне евĕрлĕ. Сăмахран, Юман çырми . Ĕлĕк çак вырăнта лаштра юмансем кашласа ларнă. Халĕ – пĕр йывăç çеç. Ваттисем каланă тăрăх вăл 300 çултан та иртнĕ.

Йĕлме çырмине унта çак йывăç йышлăн ӳснĕрен çапла каланă.

Исивар (Турпас) варĕ: тупăксем тунă хыççăн юлнă турпаса çакăнта пăрахнă.

Пихампар çырми: çакăнта выльăх пусса чӳк тунă.

Ваçка варĕ: кунта Ваçанка ятлă çыннăн сачĕ пулнă.

Утар варĕ: ку вырăнта пыл хурчĕсем нумай усранă.

Йĕкĕр тĕмески: икĕ пуян çынна мулĕпех пытарнă вырăн.

Хĕрлĕ çыр: çак çыранта тăмĕ хĕрлĕ тĕслĕ. Унта таврари ялсенчен те тăм илме çӳренĕ. Çăл куç та пур кунта. Ĕлĕк ун патĕнче çул çӳренсене ларса канма пысăк чул та выртнă теççĕ. Кайран ăна çул сарнă çĕрте усă курмашкăн ваклань. Ялти çынсем çак çăл куç шывĕ сиплĕ пулнине ĕненеççĕ. Кăшальня кун пурте унтан шыв ăсма каяççĕ. Вăл çулталăкĕ пех тăрсан та пăсăлмасть. Ĕлĕк ялти çăл типсен те кунта çӳренĕ.

Пирĕн пахчара та çĕр айĕнчен тапса тăракан çăл куç пур. Асанне ăна Вĕре Куç тетчĕ. Ун патĕнче ятлаçма-вăрçăнма юраманнине асăрхаттаратчĕ. Вĕре Куç «тытма» пултарать имĕш. Вара çыннăн утне кĕсен тухать. Пĕррехинче аннене çак пăтăрмах аптăратма пуçланă. Сыватмăшра сипленсен те пĕтмен вăл. Вара асанне Вĕре Куçа «çырлахтарнă». Кун хыççăн çеç анне сывалнă.

Çемье, йăх хушма ячĕ пĕр çынна çеç палăртмасть. Ăрури çынсене пĕтĕмĕшле пĕрлештерет вăл. Пирĕн ялти чи пысăк йăх – Петрушка йăхĕ. Кунта халь пурăнакан Николаевсен, Лукинсен, Маркияновсен çемйисем кĕреççĕ.

Ялта пултаруллă, тăрăшуллă çынсем те чылай. Николай Николаевич Николаев вăрçă ветеранĕ, Семен Ильич Ильин вăрçă вăхăтĕнче колхоз председателĕ пулнă, Николай Петрович Петров подполковник, Афган вăрçи ветеранĕ. Халĕ Севастополь хулинче пурăнать.

Тăван ялта çын шучĕ чакса пыни питĕ пăшăрхантарать мана. Нумайăшĕ ĕçкĕ пе иртĕхет, ачасем те сахал çуралаççĕ. Çапах та унăн пуласлăхĕ пур пек туйăнать. Ăна аталантарма çеç тăрăшмалла.

***Таня ВЛАДИМИРОВА.***

Етĕрне районĕ,
Кивĕ Тинкеш шкулĕ.

# Хаваслă 2014 самант

## Вăчăра



1. Чăвашсен паллă боксерĕ е М.Шолоховăн хайлавĕнчи тĕп сăнар. 2. Халăха пырса çапнă хĕн-хур, шар. 3. Тавралăх, вырăн, географи объекчĕ. 4. Йывăç. 5. Çывăх Хĕвел Тухăçĕнчи çĕр-шыв. 6. Ансат сĕтел-пукан. 7. Чăвашсен паллă фольклорисчĕ. 8. Çырма-çатра, ахрат. 9. Кăнтăрти хула. 10. Тĕш тырă. 11. Уçă ... . 12. ... вырăн. 13. Çырла. 14. Кабарда-Балкари тĕп хули. 15. Шупашкар гербĕ çине лекме тивĕçнĕ вĕçен кайăк. 16. Сăрă таврашĕ. 17. Совет космонавт летчикĕ. 18. Пусма-тавар. 19. Лаша кӳлнĕ çăмăл урапа. 20. Авалхи чăваш хĕрарăмĕсен çи-пуç пайĕ. 21. Арктикăна тĕпченĕ Норвеги ăсчахĕ, 1921 çулхи Атăлçи тăрăхĕнчи выçлăха пĕтерме хутшăннă организаци йĕркелӳçи. 22. Кострома облаçĕнчи хула. 23. Хуралтă. 24. Венесуэла тĕп хули.

***Юрий ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**

## Сăмах касмăш

**Сылтăмалла:** 3. Вăрман çимĕçĕ. 5. Шутсăр шăллă пулă. 9. Ăна хĕрарăмсем тăхăннă. 10. Вăл сунарçăн пур. 11. Ĕç тумтирĕ. 14. Вăхăт палли. 15. Пушă. 16. Кăнтăрти йывăç. 18. Тĕвесен ушкăнĕ. 21. Çăмăл апат. 22. Элĕк районĕнчи ял. 25. Пулас генерал. 26. Арменири сăрт-ту. 27. Манеж «тăванĕ». 28. Тарас Бульба ывăлĕ.

**Аялалла:** 1. Сĕт-çу таврашĕ. 2. Тĕнчипе паллă физик. 4. Çĕвĕçĕн ĕç хатĕрĕ. 6. Пуянсен çурчĕ. 7. Пĕвери пулă. 8. Ӳнер тĕсĕ. 12. Чăваш юрăçи. 13. Хваттере янă хурт-кăпшанкă. 14. Пушкăрт халăхĕн паттăрĕ. 17. Шурлăх вĕçен кайăкĕ. 18. Ĕçмелли шĕвек. 19. Хими элеменчĕ. 20. Пĕрене çумĕнчи çĕр. 23. Кĕрхи чечек. 26. Унта Робинзон Крузо пурăннă.



## Çулăн вĕçĕ пĕтмеллех, хĕвел анать – çитмеллех...



1. Куштан, сана тĕкĕнместĕп, тĕкĕнсессĕн – уйрăлмастăп (туп.юм.). 2. Кримеки ... – пуç çути, кĕмĕл çĕрĕ – ал çути, ырă çын кинĕ – пӳрт çути (каларăш). 3. Ларать мулла пек, кăшкăрать шуйттан пек (туп.юм.). 4. Пĕр ... умĕнче ик хĕрарăм валли вырăн çук (ват.сăм). 5. Чăнкăр-чăнкăр чăх ури, лаппин-лаппин хур ури (туп.юм.). 6. ... кĕперĕ. 7. Сăхманĕ кĕске, хăй вăрăм (туп.юм.). 8. ... та ахаль авăтмасть (каларăш). 9. Нимсĕр те ... пиçмест (ват.сăм.). 10. Вăл теннисла выляма кирлĕ. 11. Унта пионерсем канма çӳренĕ. 12. Атăл юппи. 13. Çĕр тăрăх шăвакан пулă. 14. Çапмасăрах макăртать (туп.юм.). 15. Вĕçет – мĕкĕрет, ларать – çĕре чакалать (туп.юм.). 16. Кашни ... – хăй шучĕпе утаман (ват.сăм.). 17. Чип-чиперкке, икĕ пичĕ шĕвĕркке (туп.юм.). 18. Çар техники. 19. Пулăçăн ĕç хатĕрĕ. 20. Пĕчĕк мучи мунча тăвать (туп.юм.). 21. Пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлени. 22. Чăваш спортсменки, Олимп чемпионки. 23. Хими элеменчĕ. 24. Сĕм вăрманта кĕсел тирки ларать (туп.юм.). 25. Вăрăм хăлхаллă – мулкач мар, чĕрнеллĕ – лаша мар (туп.юм.). 26. ... анчах йăвасăр пурăнать (каларăш). 27. Çулла çу çиет, хĕлле типĕ тытать (туп.юм.). 28. Телефон номерне палăртакан хатĕр. 29. АПШри шыв сикки. 30. Пуш ...шăн çăвар кирлĕ мар (ват.сăм.). 31. Хăй çĕнĕ, шăтăк (туп.юм.). 32. Хур хыççăн автан ... урлă каçаймĕ (каларăш). 33. Макарон тăванĕ. 34. Тапăну. 35. ... йăрансăр пулмасть (ват.сăм.). 36. Çитти-питти, пархун питти (туп.юм.). 37. Республикăри хула. 38. Шыври хăрушă вырăн. 39. Пахчари ятарлă йăран. 40. Кавказри халăх. 41. Чунсăр, юнсăр – юрă юрлать, сăмах калать (туп.юм.). 42. Ĕлĕкхи автобус. 43. Кăптăртăм-кăптăртăм, якуне тăршук (туп.юм.). 44. Авалхи скифсен хĕçĕ. 45. ... сасси – шăрчăк сасси (каларăш). 46. Кил хушшинче ... хуçăкĕ те кирлĕ (ват.сăм.). 47. Ази кӳрши. 48. Крокодил. 49. Çурăм хыçĕнчи «хутаç». 50. Кăвак така мăйне пăрса шыв ĕçет (туп.юм.).

***Николай КРАСНОВ хатĕрленĕ.***

## Ытлашшине тупăр



## Миçе сас палли-ши?




***Дина ИЛЬИНА.***
Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх.

## Мĕн калать арçын ача?



***Наташа АНДРЕЕВА.***
Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх.